Ц. Б. им. Горького

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 МАРТ 14 ТУНТИКУН
59 (4872)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ:
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 5—23

Чыс та мухтав совет разведкине!

Тӑван ҫӗршыва пӑрахса тӑшмана сутӑннӑ ирсӗрсене, сылтӑмла-троцкисла бандитсене, халӑхӑн йуллӑ, хайар тӑшманӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ тата сийенсӗрлетнӗ. Совета хирӗҫле сылтӑмла-троцкисла центрӑн процесӗ, айӑпланакансемпе свидетелсене допрос туса пӗтерни Бухарин, Рыков, Крестинский, Йагода тата вӗсен ирсӗр шайки тупӑ тӗлӗнмеле хӑрушӑ тискер ӗҫсене тупса палӑртрӗ. Пӗтӗм ҫӗршыв процеса тимлӗн пӑхса асӑрхаса тӑрать. Совет Сойузӗнчи рабочисен, хресченсен, служӑщисен, интеллигентсен кӑмӑлӗсем тарӑн тарӑхупа тата ылханупа тулнӑ. Ылханлӑ шпионсемпе ҫын вӗлерекенсене халӑх пӗр кӑмӑллӑн перӗҫе пӑрахма ыйтать. Фашисла бандитсене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе тӑкмала.

Процес кунӗсенче совет халӑхӗ шпионсен, диверсантсен, сӑтӑрҫӑсен, провокаторсен, ҫынвӗлерекенсен ҫӗлен йӑвине тупса палӑртнӑ хӑйӗн пархатарлӑ разведкине,—Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн органӗсене, хӗрӳлӗн йуратнине питӗх те уҫҫӑн кӑтартрӗ. Паттӑрла совет разведчикӗсене тата вӗсен мухтавлӑ руководительне сталинла наркома Николай Иванович Йежова ҫуламлӑн саламланисем ССР Сойузӗн пур кӗтесӗсенчен те килеҫҫӗ.

Челябинскри Сталин йачӗпе тӑракан тракторсем тӑвакан заводӑн механо-сборочнӑй цехри рабочисем хӑйсен резолюцинче ҫапла ҫырнӑ: „Епӗр шанчӑклӑ ленинцӑ-сталинцӑ Н. И. Йежов йулташ йертсе пынипе пирӗн мухтавлӑ наркомвнудељцӑсем тӑшмансене ӑнӑҫлӑн тӑрӑ шыв ҫине кӑларнипе савӑнатпӑр. Вӗсем халӑх тӑшманӗсене малашне те ҫакӑн пекех ӑнӑҫлӑн тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пырӗҫ, тесе шанатпӑр епӗр...".

Ҫакӑн пек ӗнтӗ Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариатне халӑхсем йанӑ вӗҫӗмсӗр нумай саламсенчен пӗри.

Совет разведки— тӗрлӗ тӗслӗ тӑшмансемшӗн рабочи клас аллинчи хӑрушӑ хӗҫпӑшал пулса тӑрать. Совет разведки хӑй ревољуцин ҫивчӗ куҫлӑ хуралӗ—социалисӑм кӗрешсе илнисен тата совет халӑхӗн мирлӗ ӗҫӗн ҫивчӗ куҫлӑ хуралӗ пулнине кӑтартса пачӗ. Ленин—Сталин партийӗ тупӑ тата вӗрентсе ӳстернӗ совет разведки ӗҫре бољшевикла идейлӑхлӑ пулнипе тата пирӗн тӑван ҫӗршыври ӗҫҫынписемпе уйӑрлми ҫыхӑнса тӑнипе вӑйлӑ пулса тӑрать. Халӑх пӗлсе тӑрать: совет разведки унӑн пурнӑҫлӑ интересӗсене сыхлать, ҫавӑнпа та вӑл ун ҫине йуратса пӑхать тата ӑна пулӑшать.

Йежов йулташ ССР Сойузӗн Тӗпӗҫтӑвком Президиумӗн ларувӗнче 1937 ҫулти ийулӗн 27-мӗшӗнче ҫапла каланӑ:

„Пуҫ пулса тӑракан капиталиссен ушкӑнӗн интересӗсене хӳтӗленӗ май, капиталисла тӗнчере разведкӑ органӗсем ӗҫҫыннисен аслӑ массисем умӗнче государствӑ аппарачӗн чи ылханлӑ пайӗ пулса тӑраҫҫӗ. Пирӗн урӑхла, пирӗн совет разведки органӗсем, государствӑ хӑрушӑсӑрлӑхӗн органӗсем, совет халӑхӗн интересӗсене хӳтӗлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсене пӗтӗм совет халӑхӗ тивӗҫлипе хисеплет, тивӗҫлипе йуратать".

Совет разведкин мухтавлӑхӗ питех те пысӑк. Ирсӗртен те ирсӗр сылтӑмла-троцкисла сутӑнчӑксен заговорне тӑрӑ шыв ҫине кӑларни геройлӑ наркомвнудељцӑсен мухтавлӑх чечек ҫыхӑвӗ ҫумне ҫӗнӗ чечек пайӑрки хутшӑнтарать. Сталинла Тӗп Комитетпа совет правителстви совет разведчикӗсен руководителӗ пулса ӗҫлеме Николай Иванович Йежова лартсан, ҫӗлен шӑтӑксенче пытанса ларакан тӑшмансем хӑйсен ӗмри пӗтсе ҫитессине тӳрех туйса илнӗ. Темӗнле пытансан та Сталинла Тӗп Комитет посланецӗн тимӗр алли вӗсене йарса тытассине вӗсем пӗлнӗ. Хӑйсен ирсӗр тирӗсене ҫӑлса хӑварма тӑрӑшса, вӗсем Николай Иванович Йежова вӗлерме тӑнӑ, вӑл суд следствинче палӑрчӗ. Николай Иванович Йежова сийенлӗ емелпе вӗлерме обер-бандит Йагода хӑйӗн шайкинче тӑракан ҫынсене уйӑрса йанӑ. Анчах сылтӑмла-троцкисла бандитсем шухӑшласа хуни пурнӑҫа кӗреймен, вӑл совет халӑхӗшӗн телей ӗнтӗ.

Совет разведкин чаплӑ ҫӗнтерӗвӗ ҫавӑнпа пӗрлех йутҫӗршывсенчи буржуалӑ разведкӑсен пысӑк ҫухатӑвӗ пулса тӑрать. Сылтӑмла-троцкисла ултавҫӑсем йутҫӗршывсен разведкисемпе генераљнӑй штабӗсем тӳррӗмӗн кӑтартса панӑ тӑрӑх ӗҫлесе тӑнӑ сутӑннӑ шпионсем пулнӑ. Ку вӑл суд следствинче питех те аван курӑнчӗ. Хӑйсен хуҫисене—фашисла агрессорсене йурас тесе, троцкисла-бухаринла-рыковла шайкӑ сӑтӑрсем, диверсисем туса, пулас вӑрҫӑра ССР Сойузне тӑшман айне туса парӑнтарасшӑн пулнӑ, вилӗсен сӑрчӗсем урлӑ, халӑх йушӗн тинӗсӗ урлӑ тухса влаҫа хӑйсен аллине илесшӗн пулнӑ, пирӗн ҫӗршывра тепӗр хут капиталисла строй туса хурасшӑн пулнӑ. Ҫак шпионсен йӑвине ҫапса салатни—вӑрҫӑ пуҫаракансене хыттӑн ҫапни пулать, ҫак ҫапни фашиссене хирӗҫ кӗрешнӗ вӑрҫӑра ҫӗнтерсе илнипе пӗр танах пулать. Предателсене нимӗн те пулӑшаймарӗ: тӗплӗн пытанни те, икӗпитлӗни те, нумай ҫул хушши провокаторла-шпионла ӗҫленӗ опыт та. Совет разведки вӗсем чейелеисе ӗҫленине пӗтӗмпех уҫса палӑртрӗ!

Пирӗн ҫӗршывра капиталисла разведкӑсен шпионла-диверҫилӗ йӑвисене ҫапса салатнӑ. Анчах, паллах ӗнтӗ, вӗсене каллех чӗртме хӑтланӗҫ. Пирӗн ҫӗршыва капиталисла государствӑсем ҫавӑрса тӑнӑ вӑхӑтра, пӗтӗм халӑхӑн мобилизациллӗ хатӗр тӑмала.

ПСК(б)П Тӗпкомӗн февраљти-мартри Пленумӗн е Сталин йулташ ҫапла каланӑ:

„Ак ҫакӑ икӗ хут иккӗ тӑваттӑ пулать тенӗ пекех паллӑ: буржуалӑ государствӑсем пӗр-пӗрин патне тыла хӑйсен шпионӗсене, сӑтӑрҫисене, диверсанчӗсене, хӑш чух ҫынвӗлерекенсене те йараҫҫӗ, вӗсене ҫав государствӑсен учрежденийӗсемпе предприйатийӗсене кӗрсе вырнаҫма, унта хӑйсен ҫыннисене тупса лартма тата „кирлӗ пулсан"—вӗсене вӑйсӑрлатмашкӑн тата вӗсен хӑватне хавшатмашкӑн, вӗсен тылӗсене сирпӗтсе ҫӗмӗрме хушаҫҫӗ. Ҫапла тӑрать ӗҫ хаљхи вӑхӑтра. Ҫапла пулнӑ ӗҫ ӗлӗк те...

Ҫапла вӑл буржуалӑ государствӑсен хушшинчи хутшӑнусен саккунӗ".

Сӑмах та ҫук. Совет Сойузӗн тылне буржуалӑ государствӑсем, кирек хӑш буржуалӑ государствӑ тылӗсене йанинчен ик хут, виҫ хут нумайрах сӑтӑрҫӑсем, шпионсем, диверсантсем тата ҫынвӗлерекенсем йараҫҫӗ.

Совет разведки умӗнче малашне калама ҫук пысӑк ӗҫ, пысӑк паттӑрлӑхлӑ пулма, хастарлӑн тата пурнӑҫа шеллемесӗр кӗрешме ыйтакан ӗҫ тӑрать. Пирӗн наркомвнудељцӑсем хӑйсен ӗҫӗнче нумай мӗлӗйунлӑ та патриотла пӗтӗм совет халӑхӗпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, совет разведчикӗсем—вӗсем разведкӑлӑ-каратељнӑй органсенче ӗҫлекеннисем кӑна мар, вӗсем тата — бољшевикла сыхӑлӑхлӑ пулма вӗреннӗ, халӑх тӑшманӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларма вӗреннӗ мӗлӗйуншар ӗҫҫыннисем. Ӗҫҫыннисен массисем ҫакна пӗлсе тӑраҫҫӗ: наркомвнудељцӑсене пулӑшнипе вӗсем хӑйсене хӑйсем пулӑшаҫҫӗ. Ӗҫҫыннисен массисем ҫакна пӗлсе тӑраҫҫӗ: Шалти ӗҫсен халӑх комиссариачӗн органӗсен ӗҫӗ—рабочи клас ӗҫӗн, социалисӑм ӗҫӗн пит пысӑк та кирлӗ пайӗ.

Нихӑҫан ывӑнми бољшевик Николай Иванович Йежов йертсе пыракан мухтавлӑ та пархатарлӑ совет разведки хамӑр тӑван ҫӗршыв мухтавӗпе чапӗшӗн ӗҫлет. Унӑн хӑватлӑ резервисем—пӗтӗм совет ӗҫхалӑхӗ. Ҫакӑнта унӑн вӑйӗ!

Донецк облаҫӗнчи „Червоный Перекоп" ертел колхозникӗсем хӑйсен резољуцинче ҫапла ҫырса хунӑ: „Пирӗн ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсене пӗтерме, халӑх хуҫалӑхне сийен кӳнӗ ирсӗр шпионсем, ҫынвӗлерекенсем, тӑван ҫӗршыва сутакансем ылханлӑ пулччӑр. Ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патнелле шанчӑклӑн пыракан совет государствин хӑватне, совет халӑхӗн ирӗкне нихӑҫан та никам та хуҫма пултарас ҫук. ССРС Верховнӑй Сучӗн Ҫар Коллегинчен троцкисла-бухаринла ирсӗр шайкӑри пур усал тӑшмансене те пӗтерсе хума ыйтатпӑр".

Ку вӑл—сылтӑмла-троцкисла изменниксемпе шпионсене хирӗҫ таса курайманлӑхпа тӑвӑлса тӑракан пӗтӗм совет халӑхӗн сасси.

Совет разведки ирсӗр заговорщиксене, тӑван ҫӗршыва сутакансене, халӑх тӑшманӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗ. Фашиссене тара кӗрешнӗ ҫак ирсӗр бандӑна совет сучӗ тивӗҫлипе хайаррӑн айӑплӗ.

(„Правда" умстатйи).

Ӗҫйалкорсен районри канашлувӗ

ТӐВАЙ. Мартӑн 9-мӗшӗнче ӗҫйалкорсемпе стена хаҫат редакторӗсен районри канашлувӗ пулса иртрӗ. Канашлура ПСК(б) Партин райком секретарӗ Б. Василйев йулташ ҫуракине бољшевикла хатӗрленсе ирттересси тата стена хаҫачӗсен задачисем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Канашлу колхозсем ҫуракине хатӗрленсе ҫитнипе ҫитменнине тӗрӗслесе тухма мартӑн 10-мӗшӗнчен пуҫласа 20-мӗшне ҫитиччен рейд туса ирттерме йышӑнчӗ. Стена хаҫачӗсем кӑҫалхи йалхуҫалӑх ҫулне бољшевикла ирттерес ӗҫре активлӑн хутшӑнса ӗҫлеме социалисӑмла ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Майӑн 5-мӗшӗнче стена хаҫачӗсен районри выставкине ирттерме йышӑнчӗ канашлу.

А. Пикишкин.

В. Илйин.

1883 КАРЛ МАРКС 1938

В. И. ЛЕНИН

Карл Маркс 1818 ҫулта, ҫӗнӗ ҫтилпе майӑн 5-мӗшӗнче Трир хулинче (Рейн таврашӗнчи Пруҫҫире) ҫуралнӑ. Ашшӗ унӑн адвокат, 1824 ҫулта протестанла тӗн йышӑннӑ йеврей, пулнӑ. Маркс ҫуралнӑ ҫемйе пуйан, куљтурӑлӑ ҫемйе пулнӑ, анчах ревољуцилӗ мар. Трир хулинче гимназирен вӗренсе тухса, Маркс малтан Боннӑри, кайран Берлинри университета вӗренме кӗнӗ, унта вӑл права ӑслӑлӑхӗсене—анчах пуринчен ытла историпе философийе—вӗреннӗ. 1841 ҫулта университетран вӗренсе тухнӑ, университет курсне ӑнӑҫлӑн вӗренсе пӗтернине кӑтартакан диссертаци Епикур философийӗ ҫинчен ҫырса панӑ. Ҫутҫанталӑк—ку шутра етем обществи те—мӗнле аталанса пыни тӗлӗшпе хӑйӗн ӑнланӑвӗсем йенчен Маркс унчухне гегелйанец-идеалист пулнӑ-ха. Берлинра вӑл сулахай гегелйанецсен (Бруно Бауер т. ур.) кружокӗнче, Гегель философинчен атеисла тата ревољуцилӗ вывӑдсем тума пӑхакансен кружокӗнче, членра тӑнӑ.

Университет пӗтерне хыҫҫӑн Маркс, профессор пулса ӗҫлес тесе, Бонн хулине пурӑнма куҫса кайнӑ. Анчах та правителствӑн реакцилӗ политики Маркса ученый пулса ӗҫлес ӗмӗте пӑрахтарнӑ, ку правителствӑ 1832 ҫулта Људвиг Фейербаха университетра студентсене вӗренттермен, вырӑнтан кӑларса йанӑ, 1836 ҫулта ӑна татах та тепӗр хут университета ӗҫлеме кӳрттермен, 1841 ҫулта ӗнтӗ Боннӑра ҫамрӑк профессорӑн Бруно Бауерӑн лекцисем вулас правине туртса илнӗ. Ку вӑхӑтра сулахай гегелйанецсен ӑс-пуҫ-шухӑш аталанувӗ Германире питте хӑвӑрт малала пынӑ. Људвиг Фейербах уйрӑмӑнах 1836 ҫулта теологийе (турӑ сӑмахне вӗрентнине) критиклеме пуҫлать те материалисӑм йенеле ҫаврӑнать, 1841 ҫулта унӑн материалисӑм уҫҫӑнах ҫӗнсе ҫийеле палӑрса тухать („Сущность христианства"); 1843 ҫулта унӑнах „Основные положения философии будущего" пичетленсе тухнӑ. „Ҫав кӗнекесен куҫ-пуҫа уҫакан вӑйӗпе хӗҫпӑшалланмала пулнӑ", тесе ҫырнӑ Енгељс кайарахпа Фейербахӑн ҫав сочиненийӗсем ҫинчен. „Епӗр" (урӑхла каласан, сулахай гегелйанецсем, ку шутра Маркс та) „сасартӑках фейербахианцӑсем пулса тӑтӑмӑр", тет Енгељс *). Ҫав вӑхатра Рейн таврашӗнчи радикаллӑ буржуа, сулахай гегелйанецсемпе хӑшпӗр йенчен пӗр пек шухӑшлаканскерсем, Келнра оппозицилӗ хаҫат: „Рейнская газета" кӑларса тӑма тытӑннӑ (тухасса ку хаҫат 1842 ҫулти йанвар 1-мӗшӗнчен пуҫласа тухма пуҫланӑ). Маркспа Бруно Бауера хаҫатӑн тӗп сотрудникӗсем пулса ӗҫлеме чӗнсе илнӗ, 1842 ҫулти октаберте ӗнтӗ Маркс хаҫатӑн аслӑ редакторӗ пулса тӑнӑ та Боннӑран Келна пурӑнма куҫнӑ. Маркс редакциленӗ вӑхӑтра хаҫат ревољуцилӗ-демократилӗ ҫулпа пыни ытларах та ытларах палӑрса пынӑ, вара правителствӑ малтан хаҫат пичетленсе тухиччен ик-виҫ цензурӑ пӑхса тухмала тунӑ, кайрантарах, 1843 ҫулти йанварӗн пӗрремӗшӗнче, пачах хупса лартма йышӑннӑ. Ку вӑхат тӗлнеле Марксӑн хаҫата редакцилеме пӑрахмала пулнӑ, анчах та Маркс хаҫат редакцинче ӗҫлеме пӑрахса кайни хаҫата хупса лартассинчен ҫапах та ҫӑлайман: ӑна 1843 ҫулти март уйӑхӗнче хупса лартнӑ. „Рейнская газета"-ри Марксӑн чи пысӑк статйисенчен Енгељс Мозел долининчи виноград ҫырлинчен ерех тӑвакан хресченсен пурнӑҫ хисепӗсем ҫинчен ҫырнӑ статйана асӑнса палӑртать. Хаҫат редакцинче ӗҫлени Маркса, вӑл политикӑ економине ҫителӗклӗ таран пӗлсех ҫитменнине кӑтартса панӑ, вара вӑл ӑна ҫине тӑрса, тимлесе вӗренме тытӑннӑ.

1843 ҫулта Маркс Крейцнахра авланнӑ, вӑл Дженни фон Вестфалена, хӑйӗн ача чухнехи тусне, качча илнӗ, вӗсем качча тухассипе авланасси ҫинчен Маркс студент пулнӑ чухнех сӑмах татса ҫӗрӗсем улӑштарнӑ пулнӑ. Маркс арӑмӗ Пруҫҫири реакцилӗ дворйан ҫемйинче ҫуралса ӳснӗ. Унӑн пиччӗшӗ чи реакцилӗ саманасенчен перинче, 1850-1858 ҫулсенче, Пруҫҫийӗн Шалти ӗҫсен министрӗ пулса ӗҫленӗ. Чикӗлешйенче Арнольд Ругепе (1802—1880; сулахай гегелйанец, 1825—1830 ҫҫ. тӗрмере ларнӑ, 1848 ҫул хыҫҫӑн емигрант; 1866—1870 ҫҫ. бисмаркианец) радикаллӑ журнал кӑларса тӑрас тесе, Маркс 1843 ҫулта кӗркунне Парижа пынӑ. Ку журналӑн—„Немецко-французский ежегодник"ӑн—пӗрремӗш кӗнеки ҫеҫ тухма ӗлкӗрнӗ. Вӑл, Германире ӑна сарма хӗн пирки тата Ругепе хирӗҫӳсем тухса кайнӑ пирки, тухма чарӑннӑ. Ку журналта пичетленсе тухнӑ хӑйӗн статйисенче Маркс „мӗн пуррине пурне те пӗр хӗрхенӳсӗр критиклеме" пуҫласа йанӑ тата, уйрӑм илсе каласан, „хӗҫпӑшала критиклеме" пуҫласа йанӑ. Ку статйасенчен Маркс кӗрешӳве массана тата пролетариата чӗнекен ревољуционер иккенни курӑнса тӑрать.

1844 ҫулти ҫенҭаберте Парижа пӗрик-виҫ кунлӑха Фридрих Енгељс пынӑ, ҫакӑнтан вара ӗнтӗ вӑл Марксан чи ҫывӑх тусӗ пулса тӑрать. Маркспа Енгељс Парижри ревољуцилӗ ушкӑнсен унчухнехи вӗресе тӑракан пурнӑҫне пит те хастаррӑн хутшӑннӑ та (унчухне уйрӑмӑнах Прудон вӗрентӳвӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Ку вӗренӳве Маркс хӑйӗн „Нищета философии" йатлӑ кӗнекинче татӑклӑн ҫапса хуҫнӑ), социалисӑмӑн пур тӗрлӗ вакбуржуалӑ вӗрентӳвӗсемпе пит те вирлӗн кӗрешсе, ревољуцилӗ пролетарилӗ социалисӑмӑн йе коммунисӑмӑн (марксисӑмӑн) теорийепе тактикине палӑртса туса хатӗрленӗ... 1845 ҫулта Маркса Пруҫҫи правителстви хистенипе Парижран хӑрушӑ ревољуционер тесе кӑларса йанӑ. Вара вӑл Брӳсселе куҫса кайнӑ. 1847 ҫулти ҫуркуннепе Маркспа Енгељс вӑрттӑн ӗҫлекен пропагандисла обществӑна „Коммуниссен сойузне" члена кӗнӗ, ҫав сойузӑн II-мӗш сйесӗнче 1847 ҫулхи нойаберте Лондонра пит те хастаррӑн хутшӑнса ӗҫленӗ, сйес хушнипе чаплӑ „коммунисла партийӗн манифеспе" ҫырса хатӗрленӗ, вара вӑл 1848 ҫулхи февраљте пичетленсе тухнӑ. Ку произведенире генилӗ уҫҫӑн та пит те витӗмлӗ, пит те вырӑнлӑ сӑмахсемпе ҫутҫанталӑк—ку шутра етем обществи те—мӗнле аталанса пынине ҫӗнӗле ӑнланма кирлине, вӗҫне ҫити материалисӑма, обществӑла пурнӑҫа та ҫутатса параканскере, диалектикӑна—аталану ҫинчен чи пур йенлӗ те, чи тарӑн вӗрентӳве—клас кӗрешӳвӗн теорине тата пролетариатӑн, ҫӗнӗ коммунисӑмла обществӑ тӑваканӗн, пӗтӗм тӗнчипе историлӗ ревољуцилӗ рољне ҫутатса панӑ.

1848 ҫулхи Февраљти ревољуци хыпса тухсан Маркса Белгирен кӑларса йанӑ. Вӑл каллех Парижа куҫнӑ, а унтан Мартри ревољуци хыҫҫӑн Германийе, тӗллесех Келна куҫнӑ. Келнра 1848 ҫулти ийулӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 1849 ҫулти майӑн 19 мӗшчен „Новая Рейнская газета" тухса тӑнӑ; унӑн аслӑ редакторӗ Маркс пулнӑ. 1848—1849 ҫулсенчи ревољуцилӗ событисем ҫӗнӗ теори тӗрӗс иккенне калама ҫук аван кӑтартса панӑ, кайарахпа тӗнчери мӗн пур ҫӗршывсенчи пур пролетарилӗ тата демократилӗ йухамсем те ӑна ҫирӗплетсе пынӑ. Ҫӗнтерӳллӗ тухнӑ контрревољуци Маркса малтан суда панӑ (1849 ҫулти февралӗн 9 мӗшӗнче тӳрре кӑларнӑ), кайран вара (1849 ҫулти майӑн 16-мӗшӗнче) Германирен кӑларса йанӑ. Маркс малтан Парижа куҫнӑ пулнӑ, анчах 1849 ҫулти ийунӗн 13-мӗшӗнчи демонстраци хыҫҫӑн унтан та кӑларса йанӑ та вара вӑл Лондона кайнӑ, кунта мӗн ҫӗре кӗриччене пурӑннӑ.

Емигрицинчи пурнӑҫ условийӗсем,—Маркспа Енгељс пӗр-пӗрин патне ҫырнӑ ҫырусенчен уйрӑмӑнах уҫҫӑн курӑнаканскерсем (ку ҫырусене 1912 ҫулта пичетлесе кӑларнӑ),—пит те йӑвӑр пулнӑ. Маркспа унӑн ҫемйине нуша пӑвмаллипех пӑвса тӑнӑ; Енгељс хӑйӗн пурнӑҫне хӗрхенмийех пӗр-май укҫа тенкӗпе пулӑшса тӑман пулнӑ пулсан, Маркс „Капитала" ҫырса пӗтереймен пулнӑ пулӗччӗ кӑна мар, кӗлмӗҫлӗх пусмӑрӗ айӗнче хӑтӑлмийех пӗтнӗ пулнӑ пулӗччӗ. Кунсӑр пуҫне, вакбуржуалӑ пролетарилӗ мар социалисӑмӑн пуҫпулса тӑракан вӗрентӳвӗсемпе йухӑмӗсене хирӗҫ йӑланах Марксӑн ирӗксӗрленсех пӗр хӗрхенӳсӗр кӗрешме тивнӗ; тепӗр чухне Маркса хӑйне хирӗҫ пыракан урса кайнӑ та тискер тапӑнусене „Господин Фогт" ирӗксӗрех сирсе ывӑтма тивнӗ. Емигрицинче пурӑнакан ҫынсен кружокӗсене хутшӑнмасӑр, вӗсенчен пӑранса тӑрса, Маркс истори тӗлӗшпе ҫырнӑ чылай кӗнекисенче хӑйӗн материалисӑмлӑ теорине малала аслӑлантарса-аталантарса пынӑ, анчах хӑйӗн вӑй-халне пуринчен ытла политикӑ економине вӗренес ҫӗре йанӑ. Ку ӑслӑлӑха Маркс хӑйӗн „К критике политической экономии" (1859) тата „Капитал" (1 т., 1867) йатлӑ сочиненийӗсенче ревољуцилентернӗ.

50-мӗш тата 60-мӗш ҫулсен вӗҫӗнчи демократилӗ йухӑмсем чӗрӗлсе вӑй илнӗ саманара Марксӑн практикӑлӑ ӗҫлеме каллех тытӑнмала пулнӑ. 1864 ҫулта (ҫентаберӗн 28-мӗшӗнче) Лондонра чаплӑ 1-мӗш Интернационала, „Пӗтӗм Тӗнчери Рабочисен Йулташлӑхне" организациленӗ. Маркс ку обществӑн чун-чӗрийӗ пулнӑ, унӑн пӗрремӗш „чӗнсе каланийӗн" тата темӗн чухлӗ резољуцийӗсен, зайавленийӗсен, манифесӗсен авторӗ пулнӑ. Тӗрлӗ ҫӗршывсенчи рабочисен йухӑмне пӗрлештерсе пырса, пролетарилӗ мар, Маркс чен хи социалисӑмӑн тӗрлӗ формисене (Мадзини, Прудон, Бакунин, Анлири либералла тред-йунионисӑм, Германире Лассалле сылтӑмала сулӑннисене т. ыт.) пӗр ӗмӗтлӗ пулса ӗҫлес ҫулпа йама тӑрӑшса, пур ҫав сектӑсемпе шкулсен теорийӗсемпе кӗрешсе пырса, Маркс тӗрлӗ ҫӗршывсенчи рабочи класӑн пролетарилӗ кӗрешӳн пӗрлӗхлӗ тактикине тупса туса пынӑ. Париж коммуне ҫӗмӗрсе тӑксан (1871),—Париж коммунне Маркс ҫав тери тӗрӗс, ҫав тери вырӑнлӑ, калама ҫук лайӑх, ҫав тери витӗмлӗ, ревољуцилӗ хакланӑ („Гражданская война во Франции 1871 года"),—тата Интернационала бакуниссем икке уйӑрса йарсан, Интернационалӑн Йевропӑра текех ӗҫлесе пурӑнма май пулман. Интернационалӑн Гаагӑри конгресӗ хыҫҫӑн (1872) Маркс тӑрӑшнипе Интернационалӑн Генераллӗ советне Њиу-Йорка куҫарнӑ. Пӗрремӗш интернационал хӑйӗн историлӗ рољне вӗҫне ҫитернӗ, тӗнчен мӗн пур ҫӗршывсенчи рабочисен йухӑмӗ танлаштармийех вӑйлӑн ӳссе кайас самана, рабочисен йухӑмӗ шӑпах сарлакӑша ӳссе кайас, уйрӑм нацилӗ государствӑсен ҫӗршывсенче массӑлӑ социалисӑмла рабочи партисем тӑвас самана килсе тухнӑ.

Интернационалта калама ҫук вӑй хурса ӗҫлени тата унтан та ытларах вӑй хурса теори тӗлӗшпе ӗҫлени Марксӑн сывлӑхне пуҫпех хавшатса ҫитернӗ. Вӑл, темӗн чухлӗ ҫӗнӗ материалсем пухса тата чылай чӗлхесене (сӑмахран вырӑс чӗлхине) вӗренсе, ҫав чӗлхесемпе ҫырнӑ материалсемпе палашса политикӑ економине ҫӗнетсе ҫырса пырас ӗҫе тата „Капитала" ҫырса пӗтерес ӗҫе тӑрӑшса туса пынӑ, анчах чир ӑна „Капитала" пӗтерме май паман.

1881 ҫулти декаберӗн 2-мӗшӗнче унӑн арӑмӗ вилнӗ, 1883 ҫулти мартӑн 14 мӗшӗнче Маркс хӑйӗн кресли ҫинче лӑпкӑн ӗмӗрлӗхех ҫывӑрса кайнӑ. Ана хӑйӗн арӑмӗпе тата чӗререн паранса пурӑннӑ кил работниципе, ҫемйе членӗпе пӗрех пулнӑ Елена Демутпа йунашар Кайгейт йатлӑ масар ҫине Лондонра пытарнӑ.

x) Ф. Енгелс. „Лудвиг Фейербах", Гиз 1923 ҫ. 89 стр.

Ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерессишӗн

Ӗлӗкрех пирӗн йал ҫӗрӗ ҫинче гектар ҫӗр ҫинчен 40—50 пӑтран ытла тырӑ туса илеймен. Епӗр 1935 ҫултанпа пуҫласа гектартан 14 центнертан мала туса илме тытӑнтӑмӑр. Иртнӗ ҫулта пирӗн тырӑсене пӑр ҫапрӗ пулин те, вӑтам шутпа кашни гектартан 19-шар центнер ытларах, уйрӑм участкӑсем ҫинчен 28-шар центнер тӗштырӑ туса илтӗмӗр.

Колхозӑн пӗрлешӳлӗ тупӑшӗпе пӗрлех колхозниксен тупӑшӗ те хӑвӑрт ӳсет. Ӗлӗк начар пурӑннӑ ҫынсем халӗ колхозра пуйан пурнӑҫпа пурнаҫҫӗ.

Ҫуракинче лаша вӑйӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Епӗр лашасене лайӑх пӑхатпӑр, пирӗн нихӑҫан та начар лаша пулман. Ҫуракинче лашасене тӑрантарма 200 центнер сӗлӗ, 280 центнер улӑх ути тата ыттине те уйӑрса хунӑ.

Кӑҫал икӗ колхозпа: „Ильич" тата „Новый мир" колхозсемпе ӑмӑртатпӑр. Пирӗн колхозниксем вӑтам шутпа кашни гектартан 130 пӑтран кайа мар, пӗрремӗш бригадӑ 150 пӑтран кайа мар, рекордлӑ участкӑ ҫинчен 250 пӑт таран тырӑ туса илме обйазателствӑ илчӗҫ. Пӗрремӗш бригадӑн бригадирӗ Шумилов йулташ республикӑри сљотра премий илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Кӑҫал вырӑнти удобренисене хатӗрлес тӗлӗшпе тимлӗн кӗрешетпӗр. Тислӗк ҫӗртмели вырӑна 2061 лав тислӗк тултартӑмӑр, уйа 2200 лав торф кӑлартӑмӑр, 16 центнер аммиаклӑ селитрӑ, 7 центнер кали тӑварӗ, 7 центнер суперфосфат, 50 центнер фосфорит ҫӑнахӗ хатӗрлерӗмӗр. Ҫаксемпе тӗрӗс усӑ курса, мӗнпур ӗҫе вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа туса ирттерсе, кӑҫалхи ҫул гектартан 130 пӑт тӗштырӑ туса илетпӗрех.

Колхоз пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессипе пӗрлех, йышлӑ та ӑратлӑ выљӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешет. Хаљхи вӑхӑтра фермӑра 63 пуҫ ӗне тата сурӑхсем, сыснасем те пур. Ҫав шутран 15 пуҫ „Красногорбатовски" ӑратсем. 1938 ҫулшӑн аш-какай парас ҫулталӑк планне 50 процент ытла тултартӑмӑр. Сӗт-ҫу парассине квартал планне срукченех тултарса пыратпӑр. Иртнӗ ҫулта фермӑран 14 пин те 230 тенкӗ тупӑш илтӗмӗр.

Епӗр хамӑр ӗҫе бољшевикла организацилесе Сталин йулташ лозунгне пурнӑҫласа ҫитерес тӗлӗшпе пӗтӗм вӑйа хурса кӗрешетпӗр.

Трак районӗнчи „Ҫӗнӗ пурнӑҫ" колхоз председателӗ Н. Илйин.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Мартăн 7-мĕшĕнчи ирхи лару

Айăпланакан Бухарина малала допрос туни*)

Председател Ульрих. Айăпланакан Бухарин, хăвăрăн совета хирĕçле ĕç çинчен малала кăтартса парăр.

Бухарин. Виçĕмкун йулашкинчен епĕ, 1932 çул вĕçĕнче сылтăммисен, троцкиссен, зиновйевцăсен блокĕ пулса тăни çинчен, вăл блок Рÿтин платформи çинче пулни çинчен каланăччĕ. Сылтăммисен контрреволюцилĕ организацинче пулнисен хушшинче вăл вăхăт тĕлне террорла шухăш-кăмăлсем тапранса тухма пуçланăччĕ. Вăл шухăш-кăмăлсене манăн учениксем тесе йат панисен ушкăнĕнче, Угланов тавра пухăнакан Матвейев ушкăнĕнче, Рыков майлă тăракансен хушшинче тата профсойузниксем хушшинче курма пулатчĕ. Хĕрлĕ Çарти заговорщиксен ушкăнне те çав вăхăт тĕлнелех тунă. Епĕ ун çинчен Томскийрен илтрĕм, ăна ун çинчен тÿррĕмех Йенукидзе пĕлтернĕ пулнă.

Çав вăхăт тĕлнелех, урăхла каласан, 1932 çул вĕçĕ йе 1933 çул пуçламĕшĕ тĕлнеле, контактлă текен центр пулса тăнă. Вăл центра партине хирĕçле тĕрлĕрен контрреволюцилĕ йухăмсен представителĕсем, çав шутрах сылтăмрисем те кĕнĕ. Государствăлă переворот тăвас идейă пирĕн, сылтăм заговорщиксен, 1929—30 çул тĕлнеле çуралса тухнă. Кремĕле хураллас ĕç унчухне Йенукидзе аллинче тытăнса тăнă май ку идейăна чи малтан Томский каласа панăччĕ, вăл Йенукидзене тăтăшах çыхăнса тăнă. Çав вăхăтрах тата Рыков хăйĕн служба положенийĕнĕ усă курасси çинчен те калаçма май пулнă, вăл унчухне Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулнă. Çав тапхăртах епĕр совет правителствине вăйпа, заговорла хутшăннă çар сыннисен ушкăнĕ пулăшнипе сирпĕтсе пăрахас ыйтува, сÿтсе-йавнă.

Вышинский. Вăл çынсем Тухачевский, Примаков тата ыттисем-и?

Бухарин. Пăлтах тĕрĕс. 1931—1932 çулсенче политикăлă конйунктурă улшăннă май повстанчествă йухăмне сарса парас тĕлĕшпе ытларах ĕçлемеле теиĕччĕ, вара сылтăмрисен центрĕ йертсе пынипе контрреволюцилĕ сылтăмла организаци провокаци туса темиçе тĕлте кулакла восстани çĕкленĕччĕ.

Вышинский. Тÿррĕмĕнех есĕр кăтартса панипе тата есĕр йертсе пынипе-и?

Бухарин Пăлтах тĕрĕс. Епĕ кулакла восстанисем хатĕрлемешкĕн Слепкова Кубане йатăм. Рыков Ейсмонта Кавказа йачĕ. Ейсмонт сылтăм Пивоваровпа тата Белобородовпа—троцкиспа çыхăннă. Кусемсĕр пуçне çакна пĕлтерме пултаратăп: кулакла саботаж кĕрешÿри питрех çивчĕ формăсен умĕнхи темĕнле тапхăрĕ пулса тăрат тенине мана Н. Петровский тата Зайцев пĕлтернĕччĕ.

Вышинский. Есĕр Ейсмонт çинчен асăннă май, манăн сиртен есĕр шурăгвардейцăсен ушкăнĕсемпе тата нимĕç фашисĕсемпе çыхăнса тăни çинчен ыйтас килет. Ку обстойателствă çинчен пĕлнĕ-и есĕр?

Бухарин. Епĕ ăна пĕлместĕп. Кирек йепле пулсан та епĕ ăна астумастăп.

Вышинский (Суда). Рыковран ыйтма ирĕк парăр. Кун пирки есĕр мĕн калама пултараттăр?

Рыков. Епĕ Пивоваровран çакна пĕлнĕ: Слепков кăтартувĕ тăрăх, унăн канашĕ тăрăх организациленнĕ казак сойузĕ...

Вышинский. Шурăгвардейцă-казаксен сойузĕ?

Рыков. Çапла... вăл, çав контрреволюцилĕ организаци кадрĕсен составне кĕнĕ реемигрантсем урлă, йутçĕршыва тарса кайнă казаксен йулашкипе çыхăнса тăнă. Çак çыхăнура нимĕç фашисĕсем пулăшу парса тăнă. Ку сойуза организацилес ĕçе пуçараканĕ, Пивоваров сăмахĕ тăрăх, Слепков пулнă. Слепкова Çурçĕр Кавказа Бухарин йанă, ăна Бухарин, ман шутпа, пĕр-пĕр ĕç тума таткăлă кăтартусемпе директивăсем панă.

Вышинский. Апла пулсан, вăл çыхăну Бухарин çулйĕрĕпе тухнă?

Рыков. Идейă Бухарин çулйĕрĕпе тухнă.

Вышинский. Идейă тата ăна практикăра пурнăçа кĕртесси.

Рыков. Слепков тунă ăна.

Бухарин. Епĕ Слепкова йанă, кун пирки хирĕçместĕп. Епĕ ăна шурăгвардейцă-казаксен ушкăнĕсемпе çыхăнтăр тесе йатăм.

Вышинский. Паллах! Айăпланакан Бухарин, Карахан сылтăмла-троцкисла заговорщиксен ушкăнĕнче тăни çинчен пĕлнĕ-и есĕр?

Бухарин. Пĕлнĕ.

Вышинский. Карахан—нимĕç шпионĕ пулнă иккенне пĕлнĕ-и есĕр?

Бухарин. Çук, куна пĕлмен.

Вышинский (Рыкова). Айăпланакан Рыков, Карахан нимĕçсен хăшпĕр ушкăнĕсемпе калаçусем иртерни çинчен пĕлнĕ-и есĕр?

Рыков. Çапла, çапла.

Вышинский. Тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнмали калаçусем?

Рыков. Тăшмана сутăнмалисем.

Вышинский. Карахан Сойуз территорин хăшпĕр пайне нимĕçсене пама шухăшланă, ĕмĕтленнĕ. Сирĕн блок йачĕпе туман-и ăна вăл?

Рыков. Караханпа епĕ хам курнăçман, ăна епĕ Томский сăмахĕсенчен пĕлетĕп. Вăл ун çинчен ман умра тата Бухарин умĕнче каласа панăччĕ.

Вышинский. Апла-тăк Бухарин та пĕлнĕ? Бухаринран ыйтма ирĕк парăр. Есĕр пĕлнĕ-и?

Бухарин. Епĕ пĕлнĕ.

Вышинский (Рыкова). Есĕр Украйнăпа Германи фашисăмĕ вальли татса илме шутласа тăнă-и?

Рыков. Практикă йенчен илсен Белоруссии пирки сăмах пулма пултарнă.

Вышинский (Бухарина). Сире Радек, Троцкий кăтартувĕ тăрăх нимĕçсене Украйнăна памала пулат, тесе каламан-и?

Бухарин. Украйнă пирки епĕ лайăх астăватăп; сăмах ытти облаçсем пирки те пулнă, анчах мĕнле облаçсем çинчен каланине епĕ астумастăп.

Вышинский. Есĕр: „Троцкий, террора вăйлатса, çапах та блок влаçа пырассин, че Германипе Йапони ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тухсан, вăрçăра ССР Сойузне парăнтармала тăвассине тĕп шанчăк, тесе шутлат, çавăн хыççăн вара Германине—Украйнă, Йапонине — Инçет-Хĕвелтухăçне памала пулат, тесе шутлат“, тесе кăтартса панă. Ку пулнă-и?

Бухарин. Çапла, пулнă.

Вышинский (Рыкова). Карахан нимĕçсемпе калаçу тунă. Курăнсах тăрат, сирĕн блок ăна пĕлсе тăнă. Кун çинчен Бухарин пĕлнĕ-и?

Рыков. Томский ун çинчен мана тата Бухарина каларĕ.

Бухарин. Епĕ ун çинчен вăл факт пулса тăнă хыççăн пĕлтĕм, мĕншĕн тесен Карахан...

Вышинский. Карахан нимĕç фашисĕсемпе блок йачĕпе калаçнипе есĕр ырланă-и?

Бухарин. Пĕтĕмĕшпе илсен, калаçусем тĕлĕшĕпе... епĕ ырланă, урăхла каласан, авал та усăлă тесе шутланă...

Вышинский. Пĕтĕмĕшпе илсен мар. Карахан иртернĕ калаçусене? Çав калаçусене ырланă-и есĕр?

Бухарин. Хирĕç каламан, апла пулсан, ырланă.

Вышинский. Çапла вара çакна палăртса калама пулат: Карахан нимĕç фашисĕсемпе калаçусем иртернĕ, ăна Бухарин пĕлсе тăнă. Есĕр, айăпланакан Рыков, ку çапла пулнă тесе çирĕплететтĕр-и?

Рыков. Çапла.

Вышинский. Çапла вара, айăпланакан Бухарин, Карахан нимĕçсемпе иртернĕ çав калаçусемшĕн есĕр ответ тытаттăр-и?

Бухарин. Сăмах та çук, ответлă.

Вышинский. Айăпланакан Рыков: вăл тапхăрта Белоруççине татса илесси çинчен сăмах пынă, терĕ. Çапла ăнланатăп-и епĕ?

Бухарин. Ку мана йăлтах урăхла курăнат.

Рыков. Томский пире çапла каласа пачĕ: Карахана, нимĕç фашисĕсем хăйсене економикăлă уступкă тума ыйтаççĕ, унсăр пуçне тата нацилĕ республикăсене уйăрăлма права партарассишĕн çине тăраççĕ тесе пĕлтернĕ, терĕ. Куна епĕр çавăнтах, калаçу ССР Сойузне пайăн-пайăн таткаласси çинчен пырат, тесе ăнлантăмăр.

Вышинский. Урăхла каласан, Белоруççине парасси çинчен-и?

Рыков. Вара пĕтĕмĕшпе пăхсан, епĕр ăна çавăн чухнех йышăнтăмăр.

Вышинский. Камсем вĕсем „епĕр“?

Рыков. Епĕ, Бухарин тата Томский.

Вышинский. Тĕрĕс-и ку, айăпланакан Бухарин?

Бухарин. Йăлтах мар. Белоруççи пирки мар, Украйнă пирки.

Вышинский. Аха, халь ĕнтĕ Украйнă пирки. Вĕт, калаçу халиччен Белоруççи пирки пынăччĕ. Рыкова хăй кăтартса панисене вуласа пама ирĕк парăр. Том 1, л. д. 119: „Çапах та калас пулат, хамăр влаçа парас-мĕн пулсан Польшăран хамăр вальли пулăшу пулассине шанса тăмала тăвас тĕлĕшпе Польшă çине ориентировкă тытас ыйту чылай маларах, тĕллишех каласан 1930 — 1931 çулта тухса тăнă“. Куна есĕр çирĕплететтĕр-и?

Рыков. Çапла.

Вышинский. Малала вуласа паратăп: „Пире ун чухне пĕрлештернĕ пĕтĕмĕшлĕ формулăн шухăшĕ çапла пулнă: поляксемпе (вăл вăхăт тĕлне вĕсемпе çыхăну тытассине Червйаков урлă йĕркелесе те йанă пулнă) калаçнă чухне епĕр Советлă Белоруççи республикине ССР Сойузĕнчен татса пама килĕшпĕр тенĕ“. Тĕрĕс? Ку ыйтупа кампа сÿтсе-йавнă есĕр?

Рыков. Ăна епĕ Голодедпа тата Червйаковпа сÿтсе-йавнă, вĕсем ку ĕçе пĕлсе тăнă.

Вышинский. Вĕсем ку ĕçе пĕлсе тăнă. Бухарин пĕлнĕ-и ку ĕçе?

Рыков. Çапла, пĕлнĕ.

Вышинский. Айăпланакан Бухарин, есĕр çаксем çинчен пурин çинчен те пĕлнĕ-и?

Бухарин. 1930 çулта ун пек ыйту тăма пултарайман; вăл вăхăтра влаç Гитлер аллинче пулман-ха.

Вышинский. 1930—31 çулсенче есĕр Рыковпа тата Томскипе калаçнисем пулнă-и?

Бухарин. Пулнине астумастăп епĕ.

Вышинский. Астумастăр? Айăпланакан Рыков, есĕр мĕн калăр?

Рыков. Ун çинчен чи малтан Томский пĕлтернĕччĕ. Вăл, Червйаков пĕлтерчĕ терĕ. Червйаков ун патĕнче дачăра пулнă. Вара унчух епĕр вăл ыйтува виççĕн пĕрле сÿтсе-йаврăмăр. Белоруççири контрреволюцилĕ организаципе çыхăнасси çинчен çав сĕнÿве йышăнтăмăр. Кирек мĕнле пулсан та ку ĕç Бухарин пур чух пулнă.

Вышинский. Ку ĕнтĕ Бухарин пур чух пулнă. Апла пулсан, Бухарин ун çинчен пĕлнĕ.

Белоруççири заговорщиксен вăрттăн организацин руководителĕсенчен пĕрне, Шаранговича ыйту пама ирĕк парăр. Айăпланакан Шарангович, кун пирки мĕн калăр есĕр?

Шарангович. Голодед та, Червйаков та пирĕн организацине вăл установкă çинчен, пулса тăнă факт çинчен пĕлтернĕ пек пĕлтерчĕç. Кунта манăн çакна калас пулат: ку установкă пирки калаçнă чухне Томскине нихăçан та асăнман, сăмах Рыковпа Бухарин çинчен пыратчĕ. Çакăнпа пĕрлех Червйаков Бухаринпа темиçе хут та калаçнă, вăл калаçусем хыççăн мана пĕлтеретчĕ çеç те мар, тата вăл центр канашлувĕнче пирĕн организацине пĕлтерÿсем панă чухне, Бухаринпа Рыков çапла-çапла каларĕç, тетчĕ.

Вышинский. Рыков отвечĕн малали тепĕр абзацĕ, ĕç листи 120: „Белоруççире Червйаков ытла та питĕ активлă ĕç сарса йанă. Хăйпе поляксем хушшинчи хире-хирĕç пулнă çыхăнусенче вăл тата уппала вăрттăн ĕç тăрăх çыхăнса тăракан çынсем пирĕн çав директивăсенчен тумали практикăлă выводсене пурне те туса пынă“. Çакна есĕр çирĕплететтĕр-и, Рыков?

Рыков. Паллах, çирĕплететĕп.

Вышинский. Апла пулсан, Червйаков тата сирĕнпе çыхăнса тăракан çынсем поляксемпе йаланах çыхăнса тăнă?

Рыков. Çапла.

Вышинский. Мĕнле çыхăну вăл?

Рыков. Унта шпионла çыхăну та пулнă.

Вышинский. Сирĕн организаци пайĕнче поляксемпе шпионла çыхăну тытасси есĕр панă директивă тăрăх пулнă-и?

Рыков. Паллах, çавăн пек.

Вышинский. Çав шутрах Бухарин директиви тăрăх та-и?

Рыков. Паллах, çавăн пек.

Вышинский. Есĕр тата Бухарин вăл ĕçпе çыхăннă пулнă?

Рыков. Сăмах та çук, çапла.

Вышинский. Апла-тăк есĕр шпионсем пулнă?

Рыков. (Чĕнмест).

Вышинский. Тата шпионаж организаторĕсем пулнă?

Рыков. Епĕ нимпе те шпионран лайăхрах мар.

Вышинский. Есĕр шпионаж организаторĕсем пулнă, шпионсем пулнă.

Рыков. Çапла,—теме пулат.

Вышинский. Айăпланакан Бухарин, есĕр хăвăр шпионла ĕçсемшĕн айăплă тесе йышăнаттăр-и?

Бухарин. Епĕ йышăнмастăп.

Вышинский. Сирĕн Белоруççире хăвăрпа пĕр ĕç тăвакан çынсем, заговорщиксем пулнă, вĕсен пуçлăхĕсем Голодед, Червйаков, Шарангович пулнă. Тĕрĕс-и, Шарангович?

Шарангович. Тĕрĕс.

Вышинский. Бухаринпа Рыков директиви тăрăх, вĕсем йертсе пынипе, есĕр Польшă разведкипе тата Польшă генштабĕпе çыхăннă-и? Тĕрĕс-и, Шарангович?

Шарангович. Йăлтах тĕрĕс.

Вышинский. Апла пулсан, есĕр туса пынă шпионла ĕçсене организацилекенсем камсем пулнă?

Шарангович. Рыков, Бухарин.

Вышинский. Апла-тăк, вĕсем шпионсем, сирĕн пекех...

Шарангович. Ман пекех шпионсем пулнă.

Вышинский (Рыкова). Айăпланакан Рыков, 1932 çулта сире Голодед: Белоруççири йертсе пымали мĕн чухлĕ те пулин пысăкрах вырăнсене çынсем лартмала пулсан, вĕсене пурне те Польшă разведкипе килĕштерсе лартаççĕ, тесе каласа паман-и сире? Калăр-ха, пожалуйста, оборонă тĕрекне çĕмĕрес тĕлĕшпе поляксем сăтарлă ĕç тума директивăсем пани пулнă-и?

Рыков. Ун пекки иккĕ пулнине астăватăп епĕ — вăл лашасем тата çулйĕр строителстви пирки.

Вышинский. Ун çинчен Бухарин пĕлнĕ-и? Польшă разведки пирĕн оборонă тĕрекне çирĕплетме чăрмантарма, ăна çĕмĕрме хушса панă çав директивă çинчен пĕлнĕ-и?

Рыков. Çапла.

Вышинский. Есĕр кунта Бенек çинчен, Ульйанов çинчен, поляксем оборонă тĕрекне çĕмĕрессии пирки панă директивă çинчен, ĕçлĕ çынсене Польшă разведкипе килĕштерсе лартни çинчен—кусем çинчен есĕр кăтартса патăр... „Епĕ кунта кăтартса панисем çинчен, паллах, центрăн ытти членĕсем те пĕлнĕ. Бухаринпа Томский пĕлнĕ, вăл ĕçсем çинчен çавăн пекех Шмидт та кăшт пĕлнĕ“, кунта есĕр Василий Шмидт çинчен калаттăр.

Сирĕн шутпа çак шпионла çыхăнусем çинчен Бухарин пĕлнĕ-и йе пĕлмен?

Рыков. Вăл пĕлме тивĕç пулнă, анчах ман пек тĕплĕн пĕлмен, детальсене ман пекех пĕлмен.

Вышинский (Рыкова). Епĕ детальсем çинчен мар, ĕç мĕнре пулни çинчен ыйтатăп. Ĕçĕн ăшчикĕ çинчен пĕлнĕ-и?

Рыков. Ĕçĕн ăшчикĕ çинчен Бухарина пĕлтернĕ, вăл ун çинчен пĕлнĕ.

Вышинский. Епĕ çакна палăртасшăнччĕ те ĕнтĕ. Çакна палăртнă тесе шутлама ирĕк парăр: Рыковпа Бухарин сутăнчăклă çыхăну ăшчикĕ çинчен пĕлнĕ, вăл çыхăнува шпионла ĕç тăвасси те кĕнĕ.

Председател Ульрих. Айăпланакан Бухарин, малала калăр.

Бухарин. 1933—34 çулта кулаксене çĕмĕрсе тăкнăччĕ. Повстанчествă йухăмĕ пурнăçра пулма пултарайман йапала пулса тăчĕ, çавăнпа та вара сылтăмрисен организацин центăрĕнче çĕнĕрен çакă пек тапхăр пуçланчĕ: контрреволюцилĕ заговорлă переворот çине ориентаци тытасси тĕп шухăш пулса тăчĕ.

Заговор вăйĕ вăл—Йенукидзепе Йагода вăйĕсем пулнă. Кунта тата Йенукидзе, епĕ астунă тăрăх, Кремль коменданчĕ пулнă Петерсона заговора хутшăнтарнăччĕ. Сăмах май каласан, вăл Петерсон хăй вăхăтĕнче Троцкий пуйăсĕн коменданчĕ пулнă. Унтан тата заговорщиксен çарти организацийĕ: Тухачевский, Корк тата ыттисем пулнă.

Вышинский. Миçемĕш çулта пулнă ку?

Бухарин. Епĕ, вăл 1933—34 çулта пулнă тесе шутлатăп.

Вышинский. Айăпланакан Ходжайев, Бухарин сирĕнпе калаçнă-и?

Ходжайев. Çапла, калаçнă.

Вышинский. Мĕнле, ăçта, хăçан, конкретлă мĕн çинчен?

Ходжайев. Август уйăхĕнче, Бухарин Ташкента пырсан. Епĕ Бухаринпа Чимгапри хамăн дачăра калаçнăччĕ. ССР Сойузĕн шалти лару-тăруне пăхса тухнă хыççăн, Бухарин çапла каларĕ: хамăрăн ĕçсене вăрçăра Сойуза çĕмĕрсе тăкмала тăвас çулпа туса çырас пулат, терĕ. Ун сăмахĕсем тăрăх, шалти тата тулти ларутăрусем çавăн патнеле илсе пынă. Вăл каларĕ: пирĕн сылтăмрисен, фашисла Германипе тунă килĕшÿ пур, халь Йапонипе килĕшÿ тума палăртатпăр терĕ.

Вышинский. Айăпланакан Бухарин, Ходжайев кăтартса панисене çирĕплететтĕр-и есĕр?

Бухарин. Епĕ, пирĕн тĕрлĕрен йутçĕршыв государствисемпе ĕç тытмала пулат, пĕр группировкăна çеç ĕç тытса тăма йурамаст, тата ыттисемпе те ĕç тытас пулат, тесе каланăччĕ.

Вышинский. Англи çинчен калаçу пулнă-и?

Бухарин. Пулнă.

Вышинский. Йапони çинчен калаçу пулнă-и?

Бухарин. Пулнă.

Вышинский. Германи çинчен калаçу пулнă-и?

Бухарин. Пулнă.

Вышинский. Есĕр Ходжайевпа Совет влаçне сирпĕтсе пăрахасси çинчен, ăна тума сирĕн заговорла ушкăн хатĕрленни çинчен калаçнă-и?

Бухарин. Усă мар тĕрлĕ формулăсемпе калаçнă.

Вышинский. Çапах та, вăл сире ăнланса илмеле формулăсемпе ĕнтĕ?

Бухарин. Йăлтах тĕрĕс.

Вышинский (Ходжайева.). Есĕр ăнлантăр-и?

Ходжайев. Тĕппипех ăнланнă.

Вышинский. Апла-тăк, Ходжайев тĕрĕс калат, есĕр ăна Англи разведкисемпе çыхăну тытасси çинчен каланă?

Бухарин. Ăна калани пулман вара.

Вышинский (Ходжайева). Çавăн пек пулнă-и, Ходжайев?

Ходжайев. Пулнă. Епĕр уппа: ĕçе йе Таджик çыннисем урлă туса пырсан, йе Афганистана çын йарсан аван пулат, тесе калаçса татăлтăмăр.

Вышинский. Сире хирĕç çавăнта кăтартса панисем тăрăх епĕ тата тепĕр хут ыйтатăп: совет сучĕ умĕнче йышăнасшăн мар-и есĕр, сире мĕнле разведкă хăй ретне хутшăнтарчĕ—Англи разведки-и, Германин-и йе Йапонин?

Бухарин Нимĕнле разведкă та.

Вышинский. Манăн халлĕхе Бухаринпа памали ыйтусем çук.

Председател Ульрих. Айăпланакан Бухарин, малала кăтартса парăр, анчах конкретлăрах калаçăр.

Бухарин. XVII-мĕш партсейес патнелли тапхăрта, Томский пуçаравĕ тăрăх, хĕçпăшаллă контрреволюцилĕ вăйпа усă курса государствăлă переворота шăпах XVII-мĕш партсейес вăхăтĕнче пулмала тăвас шухăш сиксе тухнăччĕ. Томский шухăшĕ тăрăх, вăл переворотра тĕлĕнмеле хăрушă преступлени тумала—XVII-мĕш партсейеса арестлемеле пулнă.

Пйатаков принциплă шухăшсемпе мар, тактикă тĕлĕшĕнчи шухăшсемпе вăл идейăна хирĕç каларĕ: çапла туни массăсене калама çук тарăхтарса çиллентернĕ пулĕччĕ. Вăл идейăна пăрахăçланă.

Калас пулат, чылай малтанхи срук сенчех епĕ хамах Семенова террориссен ушкăнĕсем организацилеме хушнăччĕ, епĕ ун çинчен хамăрăн сылтăмрисен центрĕнче доклад парса тăнă. Ăна унта йышăннăччĕ. Çапла вара, Семеновăн террорисла ушкăнĕсене организациленишĕн епĕ центр членĕсенчен пуринчен те ытларах ответлă пулса тăратăп. Çавăн пекех тата епĕ Семенов ес-ера (ун çинчен виçĕмкунхи допросра калаçнăччĕ) ес-ерсен Тĕпкомĕн вăрттăн ĕçлекен членĕсемпе çыхăнма хушнăччĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, епĕ темĕнле С. Б. Членов урлă ес-ерсен йутçĕршывсенчи организацийĕсемпе ушкăнĕсемпе çыхăнса хăтланнă. Ес-ерсем принцип тĕлĕшĕнчен блока пулăшу пама, сылтăмрисемпе, троцкиссемпе, зиновйевцăсемпе т. ыттисемпе те контакт тума килĕшнĕччĕ, анчах вĕсем формальнăй гаранти, çырсах пама та марччĕ-и, ыйтрĕç. Вĕсем лартнă условисен шухăшĕ çапларччĕ: хресчен тĕлĕшĕнчи политикăна кулак çине ориентаци тытас йеннеле улăштарасси, унтан тата ес-ерсемпе меньшевиксен партийĕсене усçăн ĕçлемеле тăвасси. Кунтан ĕнтĕ çак хăйех куранса тăрат: заговор ăнăçлă вĕçленсен пулмали правителствăна тĕрлĕрен партисен представителĕсем кĕмеле пулнă.

Кунсăр пуçне тата епĕ тÿррĕмех хам, Рыковпа калаçнă хыççăн, 1936 çулта йутçĕршыва йулашки хут кайнă чухне, Николайевскипе çыхăну йĕркелесе йатăм. Вăл—меньшевиксен партин йертсе пыракан ушкăнне пит те çывăх çын. Николайевскипе калаçнă чухне епĕ çакна палăртрăм: вăл сылтăмрисем, Зиновйев, Каменев çыннисем троцкиссем килĕшÿсем тунине пĕлсе тăракан, пур тĕрлĕ ĕçсем çинчен, вăл шутрах Рÿтин платформи çинчен те, пĕлсе тăракан сынччĕ. Пирĕн хушăмăрти калаçура пулнă конкретлă тата çĕнĕ йапала çакăччĕ: сылтăмрисен центрĕ йе конкретлă центр йе пĕтĕм заговорăн çÿлте тăракан организацийĕ арканса анас-мĕн пулсан, II-мĕш Интернационал лидерĕсем пичетре кирлĕ пек кампани пуçламала пулнă, кун пирки вĕсемпе Николайевскин каласа татăлмала пулнă.

Маншăр пуçне, сылтăмла-троцкисла организацин хăшпĕр пысăк руководителĕсем те тахçанах аталаннă контрреволюцилĕ организацисен представителĕсемпе çавăн пекех çыхăнусем тытса тăнă, преступленилĕ контакт тунă.

Рыков Николайевски урлă меньшевиксемпе çыхăнса тăнă; А. П. Смирновăн пит те пысăк çыхăнусем пулнă. Çав çыхăнусем вăл Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче пулнă чухнех пуçланса кайнă, унта вара, ăна пурте пĕлеççĕ, ес-ерсен йе есерсен çывăхнели йухăмĕсен пысăк деятелĕсем нумай пулнă.

Çапла вара, нимĕн иккĕленмели те çук—ăна епĕ пĕтĕмĕшпех те туллийĕнех йышăнатăп,—троцкиссемпе, зиновйевцăсемпе, каменевцăсемпе, буржуалă-националисла организацисемпе блок тунисĕр пуçне тата çакă пулнă: ес-ерсемпе тата меньшевиксемпе тÿррĕмех, чăнниех çыхăнса тăнă. Ушăн тÿррĕмех епĕ хам (паллах, сылтăмрисен центăрĕн руководителĕ пулнă майпа), чылай айăплă пулнă. Сăмах пуринчен те малтан—кунтах пулнă, вăрттăн ĕçлекен ес-ерсем çинчен, урăхла каласан, ес-ерсен официалă партин ĕлĕк пулнă Тĕпкомĕ çинчен пынă, иккĕмĕшĕнчен—йутçĕршыври организаци çинчен. Вăл организаци Марк Вишняк (ĕлĕкхи учредительнăй собрани секретарĕ) пек çын тавра чăмăртанса тăнă.

Германире влаçа фашиссем илсен, контрреволюцилĕ организацисен пуçлăхĕсем вăрçăлă ситуацине май йутçĕршыв государствисемпе усă курма май пурри çинчен пĕрне пĕри хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме тытăнчĕç.

1934 çулта çулла Радек мана çапла каларĕ: Троцкирен директивă илнĕ. Троцкий нимĕçсемпе калаçусем йртерет. Троцкий нимĕçсене чылай территорисем, вăл шутрах Украйнăна та, пама пулнă, терĕ. Лайăх астăватăп пулсан, çав калаçурах Йапонине территорисем парасси çинчен те сăмах пулнăччĕ.

Калас пулат, ун чухне, çав вăхăтра, епĕ Радека хирĕç каланăччĕ. Массăсен патриотисăмĕ ÿссе сарăлса пынă чух,—ун пирки нимĕнле иккĕленÿ те пулма пултарайман, — заговорла план йенĕпе пăхсан Троцкий планĕ политикăпа тактикă тĕлĕшĕнчен тĕрĕс мар пек, кунта тата ытларах асăрханса ĕçлемеле пек туйăначчĕ мана.

Вышинский. Бухарин кăтартса панисене вуласа пама ирĕк парăр мана—том 5, ĕç листи 95—96: „Томский мана иккĕ вариант сÿтсе-йавнă, терĕ; пĕри—çĕнĕ правителствă лăпкă самана вăхăтĕнче организацилесес-мĕн пулсан“..., апла пулсан, заговорщиксем лăпкă самана вăхăтĕнче çĕнĕ правителствă организацилеççĕ, „тепри—вăл правителствă вăрçă вăхăтĕнче организацилеес пулсан. Вăрçă вăхăтĕнче тумашкăн нимĕçсем економикăла пысăк уступкă тума ыйтаççĕ“..., вăл устăпкăсем çинчен епĕ малтанах каланăччĕ,—„тата территорилĕ уступкăсемшĕн çине тăраççĕ“. Калăр-ха, тĕрĕс-и ку йе тĕрĕс мар?

Бухарин. Çапла, ку йăлтах тĕрĕс.

Вышинский (малала вулат). „Епĕ Томскирен, ку майпа переворот механикки мĕнле пулмала вара, тесе ыйтрăм. Вăл ку çарти организацин ĕçĕ, унăн нимĕçсемшĕн фронт уçса памала пулат, тесе ответ пачĕ“.

Бухарин. Çапла, тĕрĕс.

Вышинский. Тĕрĕс... „ун пек пулсан Совет Сойузне фронтра çĕмĕрсе пăрахнăшăн айăплисене суда парсан аван пулат. Çапла туни пире, патриотла лозунгсемпе выляса массăсене хамăр хыççăн илсе кайма май парат“. Есĕр хирĕç калани çак пулат-и ĕнтĕ?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Фронт уçса парасçине ак мĕнле хирĕç тăнă иккен есĕр! Фронтра çĕмĕрсе тăкнишĕн айăплисене суда парас патриотла лозунгсемпе хăвăра кирлĕ пек выляса илес тата шывран йĕпенмесĕр тухас. Кун пирки Йенукидзене калаçнă-и?

Бухарин. Йенукидзепе калаçнă.

Вышинский. Караханпа калаçнă-и?

Бухарин. Калаçнă.

Вышинский. Кун пирки Йенукидзепе Карахан мĕн терĕç?

Бухарин. Вĕсем, пĕррĕмĕшĕнчен, çакна çирĕплетсе пачĕç: Карахан нимĕçсемпе, вĕсене економикăлă уступкăсем тунă условисемпе договор тунă; иккĕмĕшĕнчен, нимĕçсем хăйсене территори парасси çинчен ыйту тăратнă, Карахан кун пирки ответ паман, ку ĕçе сÿтсĕ-йавмала, тенĕ. Вăл шутрах сойузлă республикăсем уйăрăлса тухасси çинчен калакан формулă та пурччĕ. Виççĕмĕшĕнчен, ССР Сойузĕ Чехословакипе тата Франципе пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор пирки. Нимĕçсем вăл договорсене татма, çĕмĕрме ыйтнă. Карахан вара, епĕр ăна тăвайăр, тесе ответ панă. Епĕр, нимĕçсене улталайăр, вĕсем çакна ыйтнипе пурнăçа кĕртмĕпĕр, тесе шутланăччĕ.

Вышинский. Апла-тăк, унта сирĕн пĕтĕмпех ултав çинче пулса пынă. Вĕсем сире улталама шутламан-и?

Бухарин. Вăл йаланах çавăн пек пулат.

Вышинский. Сирĕнпе усă курас, кайран сÿп-çап çине кăларса ывăтас тенĕ?

Бухарин. Тĕрĕс. Нимĕçсем Германипе вăрçă сойузĕ тума ыйтаççĕ, терĕ Карахан.

Вышинский. Нимĕçсем ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнас-мĕн пулсан вĕсемшĕн фронт уçса парас шухăша пуçараканĕ епĕ пулнă, тесе йышăнасшăн мар иккен есĕр?

Бухарин. Çук.

Вышинский. Çав шухăша пуçараканĕ епĕ пулнă, тесе йышăнасшăн мар иккен есĕр?

Бухарин. Ку та тĕрĕс. Анчах ку епĕ пуçараканĕ пулнă иккенне пĕлтермест. Ку епĕ Томскипе калаçнă хыççăн пулнă.

Вышинский. Фронт уçса парасси çинчен тăракан ыйтува кирлĕ пек çутатса палăртнă тесе шутлатăп епĕ. Манăн ыйтусем урăх çук.

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

В. Н. Йаковлевă свидетеле допрос туни*)

Вышинский (Йаковлевăна). Есĕр 1918 çулта „сулахай коммуниссен“ ушкăнне хăвăр хутшăнса ĕçленине аса илеттĕр-и?

Йаковлевă. Пит тĕрĕс.

Вышинский. Çав ушкăн ĕçне организацилекенĕ кам пулнă?

Йаковлевă. Совета хирĕçле „сулахай коммуниссен“ ушкăнĕн фракцилĕ центрĕ Мускав облаç бÿровĕ пулнă. Ăна партин облаçри конференцинче вырăнсенчи роботниксем хутшăннине чылай пысăк составпа суйланă. Унтан, хăйĕн йаланхи организацилĕ йертсе пыракан ĕçне туса тăма вăл бÿро хĕсĕк состав текен состав уйарнă. 1917 çул вĕçĕнче тата 1918 çул пуçламĕшĕнче хĕсĕк состав йăлтах „çулахай коммуниссенчен“ тăнă тата вăл „сулахай коммуниссен“ ушкăнĕн фракцилĕ центрĕ пулнă та ĕнтĕ.

Вышинский. Вăл центр руководителĕ кам пулнă?

Йаковлевă. Руководителĕ Бухарин пулнă.

Вышинский. „Сулахай коммуниссен“ ушкăнĕ совета хирĕç пытанса ĕçлени мĕнре палăрнă?

Йаковлевă. Бÿрон хĕсĕк составĕ çинчен епĕ асăнтăм, вăл çав ушкăнăн фракцилĕ центрĕ пулса тăнă. Епĕ облаçри бÿрон секретарĕ пулнă, епĕ Ленинграда тухса кайнă тапхăрта,—ку вăл 1917 çулхи декабĕр пуçламĕшĕнче пулнă,—бÿро секретарĕнче Манцев ĕçленĕ. 1918 çулхи февраль вĕçĕнче Мускав облаç бÿровĕн ларувĕ пулса иртнĕ, унта нимĕçсемпе килĕшÿ тăвасси çинчен сÿтсе-йавнă. Çав ларура бÿро членĕ Стуков çак ыйту тăрăх йышăнмали резолюци пройектне сĕнчĕ тата вăл пройекта хÿтлесе сăмах тухса каларĕ, кунта тата вăл: нимĕçсемпе килĕшÿ тăвассине хирĕç пыракан политикăлă кĕрешÿре партипе правителствă руководствине улăштарасси умĕнче чарăнса тăма йурамаст çеç те мар, тата правителствăн йертсе пыракан пайне, чи çине тăрса кĕрешекен пайне—Ленина, Сталина тата Свердлова арестлесси умĕнче те чарăнса тăма йурамаст; кĕрешÿ малашне çивĕчленсе пырсан вĕсене ирĕксĕрлесе вĕлерессси умĕнче те чарăнса тăмала мар,—тесе каларĕ.

Вышинский. Ирĕксĕрлесе вĕлерессси умĕнче—кама?

Йаковлевă. Парти çулпуçĕсене: Ленина, Сталина тата Свердлова.

Çавăн пекех тата Стуков çапла каларĕ: политикăлă кĕрешÿре правителствăна улăштарни умĕнче, унăн йертсе пыракан тата политикă йенчен пĕр „килĕштермесĕр кĕрешекен пайне арестлени умĕнче те чарăнса тăма йурамаст çеç мар, тата совет влаçне çухатасси умĕнче те чарăнса тăма йурамаст, нимĕçсемпе килĕшÿ тусан вăл, совет влаçĕ, формальнă кăна пулса йулат, терĕ. Стуков панă резолюци пройектне тата çав ларура вăл калана сăмаха Мускав облаç бÿровĕн протоколсен кĕнеки çине çырса хунă.

1918 çулхи май уйăхĕнче, Мускав облаçĕнчи конференци уçăлнă май, епĕ тата Манцев облаç бÿровĕн материалне пама хатĕрлерĕмĕр, Манцев мана: Бухарин облаç бÿровĕн протоколсен кĕнекинчен çав резолюци пройектне тата Стуков сăмахне çырнине татса илме çине тăрсах ыйтат, тесе каларĕ, ку вăл Мускав облаç бÿровĕн позицине политикă йенчен лапăртасран тата вăл вăрттăн пытанса ĕçленине тăрă шыв çине кăларасран сыхласа хăварма кирлĕ, тенĕ Бухарин. Çакăн хыççăн епĕр Манцевпа иксĕмĕр протоколсен кĕнекинчен Стуков сăмахне çырнă тата вăл панă резолюци пройектне кĕртнĕ листăсене татса йе касса илсе пĕтерсе хутăмăр.

Кунта сăмах Ленин хăйĕн „Странное и чудовищное“ йатлă статйинче çырнă Мускав облаç бÿровĕн ларувĕ çинчен панă, вăл статйара Ленин резолюци çумне ăнлантарса çырнă текст çинчен калана.

(Малали 3-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

В. Н. Йаковлевă свидетеле допрос туни

(Малалли)

Облăç бÿро протоколĕсен кĕнекинчен епĕр татса илсе пĕтерсе хунă лист резољуци çумне йăлантарса çырнă текст пулнă та ĕнтĕ.

Çавăн пекех тата çав документ ăçтан тухни çинчен те каласа пама тивĕç. Облăç бÿровĕн çав ларувĕнче епĕ хам пулман; вăл вăхăтра Ленинградра пулнă. Епĕ Мускава çав лару хыççăнах; икĕ йе виçĕ кунтанах таврăнтăм. Облăç бÿро протоколĕсемпе паллашсан, епĕ Стуковпа калаçрăм, ăна—вăл панă пройект политикă йенчен никĕслесе паманскер, тесе каларăм, тата унăн сăмахне чылай çивĕч характеристикă патăм. Стуков мана çапла каларĕ: вăл пройекта политикăла никĕсленишĕн епĕ ответ тытмастăп, кун пирки санăн Бухарина каламала, мĕншĕн тесен епĕ облăç бÿровĕн ларувĕ умĕн çав резољуци пройектне çырупа пĕрле Ленинградран илтĕм, вăл çырура Бухарин мана çав пройекта хÿтлесе тухса каланă чухне мĕнле каламалли çинчен кăтартусем пачĕ, терĕ.

Çакăн хыççăн часах епĕ çак ыйту тăрăх Бухаринпа калаçрăм. Ку вăл партин VII-мĕш Сйесĕччен пулчĕ. Резољуци пройектне Стукова вăл йарса панине тата вăл, Бухарин, çав пройекта хÿтлесе мĕнле тухса каламалли çинчен Стукова кăтартусем панине Бухарин çирĕплетрĕ.

Çакăнпа пĕрлех Бухарин мана каларĕ: вăл пĕччен кăна мар çавăн пек шутлать, вăл—Бухарин—кун пирки Троцкипе нимĕн пытармасăрах калаçнă, Троцкий те вăрçăпа килĕшÿ ыйтувĕ тăрăх политикăлă кĕрешÿ тин çеç пуçланнă-ха, тесе шутлать, „сулахай коммуниссен“ вăл кĕрешÿ парти тулашне тухма пултарассине малтанах курас пулать, вăл кĕрешÿре хамăра валљи тайанса тăма майлă сойузниксем шырас пулать, тесе каланă. Троцкий Бухарина çапла кăтартса панă: çавăн пек сойузниксем пулма „сулахай“ ес-ерсем пултараççĕ,—тенĕ, вăрçă ыйтувĕ тăрăх вĕсен позицийĕ çителĕклĕ уçăмлă пулнă ĕнтĕ. Çавăн пекех тата Бухарин çапла каларĕ: Троцкий те кĕрешÿ агреççилĕ формăсем патнех çитме пултарать, правителствăна улăштарасси патне çеç мар, тата правителствăпа партин йертсе пыракан çыннисене ирĕксĕрлесе вĕлересси патнех çитме пултарать, тесе шутлать,—терĕ. Унчухне вăл Ленина, Сталина тата Свердлова асăнчĕ.

Çакăнпа пĕрлех Бухарин мана çапла пĕлтерчĕ: çав калаçура Троцкий ăна нимĕн пытармасăрах: килĕшÿ тăвас ыйту тăрăх çурмала позици йышăнни вăл, нимĕн те мар, тактикăлă прийом çеç, вăл „сулахай коммуниссен“ позицишĕн, урăхла каласан, килĕшÿ тăвассине хирĕç уççăнах тухса калама ахаљ кăна тытăнса тăрать, вăл партире çĕнĕ çын шутланать, вăл „сулахай коммуниссен“ позицийĕ çине уççăнах куççан, Троцкий партине Ленинпа кĕрешме кĕнĕ, тесе калама пуçлĕç,—тенĕ.

Çав калаçурах, Троцкин çулйĕрĕ çинчен пĕлтерсе тата „сулахай коммуниссен“ пулма пултаракан сойузникĕсем çинчен каласа, Бухарин çавăн пекех Зиновйевпа Каменева та асăнчĕ. Вăл çапла кăтартса пачĕ: Зиновйевпа Каменев вăрçăпа килĕшÿ ыйтувĕнче пит унтала-кунтала чÿхенекен позици йышăнса тăраççĕ тата çак ыйту тăрăх кĕрешÿ пуçланнăранпа уйрăм калаçусенче вĕсем тÿрех „сулахай коммуниссен“ позицийĕшĕн тăнине Бухарин умĕнче пĕр хутчен мар каласа панă. Зиновйевпа Каменев Октăбĕр кунĕсенче Октăбĕрти восстани, социалисăмлă революци ыйтувĕ тăрăх тытса тăнă хăйсен позицийĕпе хăйсене лапăртанă, çавăнпа та Ленина хирĕç уççăнах тухса каласшăн мар,—терĕ Бухарин. Зиновйевпа Каменев та, Бухаринпа Троцкий пекех, вăрçăпа килĕшÿ ыйтувĕ тăрăх политикăлă кĕрешÿ парти тулашне тухма пултарать, çавăн пек чухне вара „сулахай коммуниссен“ хăйсене валљи тайанса тăма майлă сойузниксем çинчен шухăшлас пулать, тесе шухăшлаççĕ,—терĕ Бухарин. Анчах та, Бухарин каланă пек, Зиновйевпа Каменев сойузниксен ыйтувĕнче Троцкинчен те инçерех кайаççĕ, çавăн пек сойузниксем пулма меншевиксемпе сылтăм ес-ерсем те пултараççĕ, тесе шутлаççĕ. Бухарин çапла каларĕ: Зиновйевпа Бухарин килĕшÿ тăвас тесе калаççĕ пулсан та, Ленина хирĕç пыраççĕ, вĕсем революци çĕнтерессине ĕненмеççĕ, большевиксем влаçа тытса тăрассине те ĕненмеççĕ, вĕсем пÿрпĕрех контрреволюци çĕнтерет тесе шутлаççĕ тата çав контрреволюци халиччен пулманла йунлă пулмала, теççĕ,—терĕ.

Часах епĕ хам та Зиновйевран çак ыйту тăрăх унăн шухăшне илтрĕм. Ку вăл кăшт кайарахпа, партин VII-мĕш Сйесĕ вăхăтĕнче пулчĕ. Бухарин мана тепле „Астория“ гостиницăри номĕре Зиновйев патне илсе кĕчĕ. Епĕр пырсанах çавăнтах Зиновйев контрреволюци çинчен калаçма пуçларĕ, вăл хăйĕн вăйне пухать, пире ырă пулас çук, терĕ. Бухарин калаçува килĕшÿ тăвасси çине кĕртсе йачĕ. Зиновйев çак темăна йарса илчĕ те çакăн пек каларĕ: „Ну, мĕнех-ха вара, килĕшÿ туни историре пурпĕрех пулмали тата пĕр хĕрхенÿсĕр çывхарса килекен контрреволюцине мирлĕ средствăсемпе, сахал йун йухтарнипе пурнăça кĕртме пулăшать. Килĕшÿ тунă хыççăн нимĕçсемпе шалти контрреволюци пĕрле хĕснипе совет влаçĕн хăйĕнех уступкăсем тума лекет, уйрăмăн илсен, правителствă составне ытти партисене кĕртме тивет. Нимĕççемпе килĕшÿ туни Зиновйевпа Каменев тĕрĕссине, вĕсем—социалисăмлă революци пиççе çитмен тесе калани тĕрĕссине тепĕр хут ĕнентерсе парать. Килĕшÿ тунă хыççăн нимĕççем шалти контрреволюци вăйĕсем çине тайанса, революцине буржуалă-демократилĕ çул çине куçарса лартаççĕ те Октăбĕрти переворота йерипенех пĕтерсе хураççĕ“.

Апрел вĕçĕнче, тен май пуçламĕшĕнче, вăрттăн лару, „сулахай коммуниссен“ ушкăнĕн частнăй вăрттăн канашлувĕ пулнă.

Епĕ астунă тăрăх, унта Пйатаков, Преображенский, Бухарин, Стуков, Лобов, Максимовский, Манцев, Кизељштейн тата епĕ пултăмăр. Çав канашлура Бухарин доклад турĕ. Вăл çапла кăтартса пачĕ: „сулахай коммуниссене“ партире çĕнтерсе тăкрĕç, анчах та ку вăл Брестри килĕшÿ „пилĕм патне çисе пыракан“ ыйтува кăларса пăрахмасть, „сулахай коммуниссен“ хĕçпăшала пуçтарса хума йурамасть, парти тулашĕнче сойузниксем шырас пулать, çавăн пек сойузниксем „сулахай“ ес-ерсем пулса тăраççĕ, вăрçăпа килĕшÿ ыйтувĕнче вĕсен позицийĕ вăл вăхăт тĕлне йăлтах паларса çитрĕ,—терĕ. Килĕшÿ тунă май вĕсем правителствă составĕнчен тухрĕç. Вĕсен 2-мĕш Сйесĕ пулса иртрĕ, çав сйес „сулахай“ ес-ерсем правителствăран тухнине тата вĕсем мир тунине хирĕç йышăннă позицийе ырларĕ. Вăл канашлура Бухарин çапла пĕлтерчĕ: „сулахай“ ес-ерсем февраљ уйăхĕнчех правителствăна пĕрле тăвасси çинчен „сулахай“ коммуниссемпе калаçу пуçарнă, çавăнпа та вăл правителствăна пĕрле тăвасси çинчен „сулахай“ ес-ерсемпе каллех калаçу пуçарсан вырăнлă пулать, тесе шутлать.

Калас пулать, хăйĕн докладĕнче Бухарин килĕшÿ ыйтувĕ тăрăх кĕрешÿ малашне мĕнле пулса пымали çинчен каллех малтанхи шухăшсенех каласа пачĕ, вăл шухăшсене хăй вăхăтĕнче Стуков каланăччĕ, вĕсем çинчен вăл мана епĕ пайан кăтартса панă калаçура кăтартса пачĕ. Вăл пит те агреççилĕ формăсем пулма пултарасси çинчен, хаљ ĕнтĕ правителствă çинчен тата ăна „сулахай“ коммуниссемпе „сулахай“ ес-ерсенчен тăвас ыйту пачах уçăмлăн тăни çинчен каларĕ, çакăншăн кĕрешнĕ вăхăтра правителствăн йертсе пыракан ушкăнне—Ленина, Сталина тата Свердлова арĕçлесси çинчен, кĕрешÿ малашне те çивĕчленсе кайсан совет правителствин чи тимлĕрех йертсе пыракан пайне ирĕксĕрлесе вĕлересси çинчен те ыйту тăма пултарать. Бухарин сĕнÿне—правителствăна пĕрле тăвасси çинчен „сулахай“ ес-ерсемпе калаçу туса иртересси çинчен панă сĕнÿне канашлу йышăнчĕ тата вĕсем çакăн çине мĕнле пăхнине пĕлес тесе йышăнчĕ. Çакăн пек калаçусене Бухаринпа Пйатаковăн иртермеле тесе каларĕç.

Хăшпĕр вăхăтран, часах, каллех канашлу пухрĕç, канашлу составĕ малтанхи пекех пулнă.

Иккĕмĕш канашлура Бухарин çапла пĕлтерчĕ: калаçусем пулса иртрĕç, епĕр Камковпа, Карелинпа тата Прошйанпа калаçрăмăр, „сулахай“ ес-ерсем правителствăна „сулахай коммуниссемпе“ пĕрле тума килĕшрĕç,—терĕ, вĕсен ĕнтĕ влаçа туртса илмели тата правителствăна арĕçлемели конкретнă туса хатĕрленĕ план пур, влаçа туртса илме тата правителствăна улăштарма организацилĕн хатĕрленнĕ çĕре „сулахай коммуниссем“ хутшăнса ĕçлесси çинчен татăклă условисем кăларса тăратаççĕ, тесе асăнчĕ.

Бухарин организацилĕн хатĕрленнĕ çĕре хутшăнса ĕçлеме „сулахай“ ес-ерсене принциплă килĕшÿ пама тата çакăн тăрăх вĕсемпе малашне те калаçма сĕнÿ пачĕ. Канашлу Бухарин шухăшĕпе килĕшрĕ тата çакăнта кăтартнă тăрăх калаçусене малашне те туса пымала, тесе каларĕ. Çак канашлу хыççăн темиçе кунтанах Мускав облăçĕнчи конференци пулса иртрĕ, унта „сулахай коммуниссене“ тепĕр хут йăлтах çĕмĕрсе тăкрĕç, облăç бÿроне салатса йачĕç, „сулахай коммуниссем“ организацилĕ вăйне, организацилĕ никĕсне çухатрĕç тата кирек мĕнле организацилĕ вăй пулма пăрахрĕç.

Вышинский. Çапла вара, есĕр кăтартса панă тăрăх, çакă курăнать: 1918 çултах, Октăбĕр революци хыççăн Брестра килĕшÿ тунă тапхăрта совета хирĕçле заговор пулнă, унăн составĕнче Бухаринпа унăн „сулахай коммуниссем“ текен ушкăнĕ, Троцкин хăйĕн ушкăнĕ тата „сулахай“ ес-ерсем пулнă, есĕр çакна çирĕплететĕр-и?

Йаковлевă. „Сулахай“ ес-ерсемпе заговор туни, паллах, пулнă, мĕншĕн тесен вĕсемпе пачах конкретнă калаçнă.

Вышинский. Çак ĕçре Бухарин ролĕ мĕнле пулнă?

Йаковлевă. Епĕ каларăм ĕнтĕ, çавăн пек калаçусем тума Бухарин хăй сĕннĕ, тата вăл Пйатаковпа пĕрле çав калаçусене иртернĕ.

Вышинский. Çапла вара, çав заговорăн руководителĕ пулнипе унăн ролĕ пит практикăла пулнă?

Йаковлевă. Çапла.

Вышинский. Кунсăр пуçне, Бухарин сире кĕрешÿ пынă вăхăтра партипе правителствă руководителĕсене арĕçлесси умĕнче те чарăнса тăма йураманни çинчен каланине есĕр çирĕплететĕр-и?

Йаковлевă. Вăл каларĕ: кĕрешÿ пынă вăхăтра çакăн умĕнче чарăнса тăма кирлĕ мар,—терĕ.

Вышинский. Есĕр кăтартса патăр, именно Ленина, Сталина тата Свердлова шутласа хунă-и?

Йаковлевă. Çапла, вăл хушаматсене Стуков асăнчĕ.

Вышинский. Бухарин асăнчĕ-и?

Йаковлевă. Епĕ çакнах Бухаринран та илтрĕм.

Вышинский. Совет государствин пуçлăхне Ленина, партипе правителствă руководителĕсене Сталинпа Свердлова арĕçлеме çеç мар, тата вĕсене вĕлерме пултарасси, политикă йенчен вырăнлă пуласси тата çавăн пекех тума кирли çинчен сире Бухарин та каланине есĕр суд умĕнче çирĕплетсе параттăр-и?

Йаковлевă. Бухарин кун çинчен каларĕ. Паллах, кун çинчен вăл хушăран çеç асăнса илчĕ, çав ĕçе чылай пăтравлă тата кирлĕ мар теорилĕ сÿтсе-йавнисемпе сăрмакласа пĕтерчĕ, Бухарин вăл йаланах çавăн пек тума йуратать; вăл çав шухăша, кокон пекех, вăрăммăн сÿтсе-йавнисемпе муталаса пĕтерчĕ, анчах та вăл ун çинчен каларĕ.

Вышинский. Айăпланакан Бухарин, 1918 çулта есĕр „сулахай коммуниссем“ тесе калакан ушкăна организацилекенĕ тата йертсе пыраканĕ пулнă-и?

Бухарин. Епĕ организаторсенчен пĕри пулнă.

Вышинский. Ленина, Сталина тата Свердлова арĕçлесси çинчен есĕр уççăнах каланă-и?

Бухарин. Арĕçлесси çинчен калаçни пулнă, анчах ирĕксĕрлесе вĕлересси çинчен мар.

Вышинский. Арĕçленĕ чухне есĕр ирĕксĕрлес майпа усă курма шутланă-и? Çак тĕрĕс-и йе тĕрĕс мар?

Бухарин. Тĕрĕс.

Вышинский. Манăн Бухаринпа Йаковлевăна памали ыйтусем çук. Каçхи ларуччен епĕ мана темиçе асăрхаттару тума май пама ыйтатăп.

Председател Уљрих. Пожалуйста.

Вышинский. Пĕрремĕшĕнчен, айăпланакан Плетневпа Левина айăпланипе çыхăнса тăракан зайавлени çинчен. Епĕ вăл зайавленине кунта асăннă айăпланакансен защитине пама ыйтатăп, унтан вара ăна вуласа кăтартма ирĕк пама ыйтатăп.

(Зайавленисене защчитăна параççĕ).

Коммодов. Зайавленине ĕçпе пĕрле хурассине защчитă хирĕçлемест.

Председател Уљрих. Суд зайавленисене ĕçпе пĕрле хурать.

Вышинский. Зайавлени текстне вуласа кăтартма ирĕк парăр:

„ССР Сойузĕн Прокурорне Вышинский йулташа

Сылтăмла-троцкисла заговорла блок ĕçĕ тăрăх айăпласа çырнипе паллашса,—вăл кăçалхи мартăн 3-мĕшĕнче пичетленсе тухнă,—сире çакăн çинчен пĕлтерессине хамăн тивĕç тесе шутлатăп:

Кремљти санитари управленин врачĕ пулса ĕçлеме мана Алексей Максимович Горький йулашки хут чирленĕ вăхăтра хăйĕн патне дачăна шалти вливанисем тума йачĕç.

Епĕ лайăх астăватăп, А. М. Горький чирлесен малтанхи кунсенче ăна чĕрене тивекен емелсем пит нумай панă, вăл емелсене ăша та, шалти вливанисемпе тата инйекцисемпе панă.

Епĕ хам, сиплекен врачсем кăтартса панă тăрăх пуринчен ытла Л. Г. Левин кăтартса панă тăрăх, çакăн пек инйекцисемпе шалти вливанисем турăм: дигален, кардиазол, глюкозă тата глюкозăна строфантпа тата строфантинпа (ку нимĕççен пулмала) хутшăнтарса.

Сире çакăн çине çавăрăнса пăхма хушатăп: çак чĕрене тивекен емелсене А. М. Горький чирлесен малтанхи кунсенчех пит нумай панă.

Строфантинпа черетлĕ вливани тунă чухне епĕ Л. Г. Левин доктора строфантинпа усă курни пирки хам иккĕленни çинчен каласа патăм, епĕ вăл емелрен шиклентĕм, унпа усă курма епĕ хăранă. Çакăн хыççăнах Левин малашне строфантинпа вливани тума пăрахрĕ. Ку çакăнтан та паллă: епĕ специалист терапевт мар, çак йенчен илсен манăн шухăш Л. Г. Левин докторшăн, ĕççем йĕркелĕ пырас пулсан, уйрăмăнах нимĕн вырăнне те тăмала мар.

Çакна та палăртса хăварас пулать: чĕре патне пыракан йун тымарĕсене строфантин сирпĕтсе кĕртессине дигаленпа пĕр вăхăтрах туса пынă (çав вăхăт хушшинче).

А. М. Горький виличчен пĕр вунă куна йахăн малтан профессор Плетнев, Горький дачине консултаци тума пынăскер, епĕ черетлĕ вливани тума хатĕрленнине курсан (мĕнле вливани тума хатĕрленнине тĕрĕс астăваймастăп) мана: „Мĕн тума есĕр çавăн пек тăваттăр, чирлĕ çынна çавăн пек чухне канлĕн вилме парас пулать“ тесе намăса пĕлмесĕр каларĕ.

Плетневăн çав зайавленийĕ çинчен епĕ Левин доктора унчухнех каласа пĕлтертĕм, вăл вара вливанине малашне те туса пымала, тесе каларĕ.

Çакăнта çырса панисене пурне те епĕ, кирлĕ пулсан, Сире судра çирĕплетсе пама пултаратăп тата кунта çырни пирки ответ тытатăп.

Доктор **М. Й. Белостоцкий**“.

Вышинский. Епĕ судран свидетел пулса показанисем пама Белостоцкий доктора чĕнме ыйтатăп.

Çакăнпа пĕрлех, А. М. Горькине, Менжинскипе Куйбышев йулташсене, Горький ывăлне М. А. Пешкова вĕлернипе тата Н. И. Иежов йулташ пурнăçĕ çине тапăннă ĕççемпе çыхăнса тăракан обстойателствăсене ăнлантарса парас тесе çак составран медицинă експертизине тума ыйтатăп:

1. Ăслăлăхăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, проф. Николай Адолфович Перешевский.
2. Ăслăлăхăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, проф. Дмитрий Александрович Бурмин.
3. Профессор Владимир Никитич Виноградов.
4. Профессор Димитрий Михайлович Российский.
5. Медицинă ăслăлăхĕсен докторĕ Владимир Дмитрийевич Зипалов.

Медицинă експертизи тăвасси тата ăна çак составран тăвасси çинчен епĕ ыйтнине пурнăçа кĕртес пулсан, каçхи лару тĕлне експертизăна ыйтусем пама ирĕк парăр.

Председател Уљрих. Свидетел чĕнесси тата експертиза тăвасси пирки защчитă хирĕçлемест-и?

Коммодов. Свидетел чĕнесси тата експертизă чĕнесси пирки защчитă хирĕçлемест.

Председател Уљрих. Свидетел пулма Максимилиан Йулианович Белостоцкий доктора чĕнесси çинчен ССР Сойуз Прокурорĕ Вышинский йулташ ыйтнине, çавăн пекех тата прокурор Вышинский йулташ асăннă пилĕк çынтан тăракан експертизăна чĕнесси çинчен ыйтнине суд пурнăça кĕртме йышăнчĕ.

(ТАСС).

Мартăн 7-мĕшĕнчи каçхи лару

В. Н. Йаковлевă свидетеле малала допрос туни*)

Председател Уљрих. Айăпланакан Бухарин, сирĕн Йаковлевă свидетеле памали ыйтусем пур-и?

Бухарин. Пур. Епĕ Йаковлевă свидетелтен ыйтатăп, Троцкийе хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра Камковпа Карелин калаçувĕсене епĕ чи малтан пичетлесе кăларнине вăл пĕлет-и?

Йаковлевă. Мана вăл паллă, кунпа пĕрлех мана тата çак та паллă: парти Троцкийе хирĕç хыттăн кĕрешнĕ вăхăтра Бухарин çак ларутăру çинчен пĕлтерчĕ, анчах вăл тĕпне çитиччĕнех каласа памарĕ. Унăн пĕтĕм чаршава уçса пама хайулăх çитмерĕ, вăл ăна пĕр печĕк хĕрринчен çеç çĕклерĕ.

Вышинский. Сирĕн шухăшпа Бухарин мĕн пытарнă, вăл мĕн пирки шарламарĕ?

Йаковлевă. Вăл „сулахай коммуниссемпе“ „сулахай“ ес-ерсен хушшинче заговор пулни çинчен, вăл заговора Бухарин хăй активлăн йертсе пынипе организацилини çинчен шарламарĕ.

Вышинский (Бухарина). Есĕр совет влаçне хирĕçле заговора, урăхла каласан, „сулахай коммуниссемпе“ „сулахай“ ес-ерсен заговорне организацилекенсенчен пĕри пулнă, тĕрĕс-и?

Бухарин. Çапла. Пйатаков урлă пулса пынă заговорла калаçусене хутшăнса ĕçленĕ чухне çавăн пек самант пулнă.

Вышинский. Çак „пĕр самант“ мĕн чухлĕ вăхăта пынă?

Бухарин. Вăл нумайах пымăн, темиçе уйăха йахăн пынă пуљ, тесе шутлатăп.

Вышинский. Заговор пирки есĕр конкретлăн кампа калаçнă?

Бухарин. Епĕ икĕ криминалнăй калаçува йышăнатăп. Брестри килĕшÿве тăваччен пирвайхи калаçу Карелинпа, Пйатаковпа, Камковпа пулнă.

Вышинский. Есĕр ку калаçува криминалнăй тесе шутлаттăр-и?

Бухарин. Çапла, шутлатăп. Тепĕр криминалнăй калаçу Пйатаковпа пулнă, ăна „сулахай“ ес-ерсен ушкăнĕпе—Камковпа, Карелинпа, тата такампаччĕ, çакнашкал йĕркесем пекех калаçу туса иртерме хушнă.

Вышинский. Мана 4 том, 92-мĕш листа вуласа пама ирĕк парăр, унта Камков çапла кăтартса парать: „Бухарин мана çапла каларĕ: Брестри килĕшÿ ыйтувĕ тăрăх Ленин позицине хирĕç парти ретĕнчи пирĕн кĕрешÿ çивĕчленсе пырать, пирĕн ретре „сулахай“ ес-ерсенчен тата „сулахай коммуниссенчен“ çĕнĕ правителствă тăвас пирки ыйту сÿтсе-йаваççĕ. Çавăнпа пĕрлех Бухарин çĕнĕ правителствăн пулас руководителĕн кандидатне Пйатакова асăнса каларĕ, тата правителствăна улăштарассине, унăн Ленин пуç пулса тăракан составне арĕçленипе пĕрле тума шухăшлани çинчен каларĕ“.

Çакăн пек калаçу пулнă-и?

Бухарин. Пурте кун пекех мар, анчах çавăн йеверлĕ.

Вышинский. Çавăн йеверлĕ. Манăн урăх ыйтусем çук.

(ТАСС).

В. Н. Манцев свидетеле допрос туни*)

Вышинский. Свидетел Манцев, 1918 çулта „сулахай коммуниссен“ ушкăнне хутшăнса ĕçленĕ-и есĕр?

Манцев. Çапла, хутшăнса ĕçленĕ.

Вышинский. Çав ушкăнра есĕр рйадовой ĕç тунă-и йе йертсе пырас тĕлĕшпе ĕçленĕ?

Манцев. Йертсе пырас тĕлĕшпе ĕçленĕ.

Вышинский. Вăл ушкăна тата кам активлăрах хутшăнса ĕçленĕ?

Манцев. „Сулахай коммуниссен“ практикăла ĕçĕн центрĕ Мускав облăç бÿровĕ пулнă, унăн йертсе пыракан чăмăрĕ пĕтĕмпех „сулахай коммуниссенчен“ тăнă. Бухарин „сулахай коммуниссен“ фракцин лидерĕ пулнă.

Вышинский. „Сулахай коммуниссен“ ушкăнĕпе „сулахай“ ес-ерсен ушкăнĕ хушшинчи çыхану сем вăл вăхăтра мĕнле пулнă?

Манцев. Мускав облăç бÿровĕн ларувĕсенчен пĕринче (вăл ларура „сулахай коммуниссен“ фракци членĕсем пурте пекех—Йаковлева, епĕ, Ломов, Максимовский, Стуков, Кизељштейн тата ыттисем те, фракци ĕçĕн руководствине çывăх хутшăнса ĕçленисем, нумай пулнăччĕ) Бухарин доклад тухса каланăччĕ. Çав докладра вăл: Брестри килĕшÿве парти сйесĕпе советсен сйесĕ ырланă хыççăн пĕр çул çеç йулать, вăл çул, Совет правителствине хирĕç восстани тăвасси пулать, терĕ.

Çав докладрах вăл çакна пĕлтерчĕ: переворота ăнăçлă тума кирлĕ услови вăл—партипе правителствă руководителĕсене—Ленина, Сталина тата Свердлова арĕçлесси тата, кирлĕ пулсан, вĕсене ирĕксĕрлесе пĕтересси, простă каласан—вĕсене вĕлересси пулать,—терĕ.

Вышинский. Ăна есĕр хăвăрах илтрĕр-и?

Манцев. Çапла, хамах илтрĕм. Çавăн пекех ăна çав пухура пулнисем ыттисем те пурте илтнĕ. Унтан вăл çакна пĕлтерчĕ: епĕ „сулахай“ ес-ерсемпе, вĕсемпе сойуз тăвасси çинчен, калаçусем иртеретĕп, тĕрĕсрех каласан, вĕсемпе калаçса татăлтăм, терĕ. Епĕ унчухнех, фракцине йертсе пырас тĕлĕшпе ĕçлекеннисем пурте пĕлнĕ пекех, çакна пĕлсе тăнă: ун чухне „сулахай“ ес-ерсем, „сулахай коммуниссем“ пекех, Совет правителствине хирĕç восстани тума хатĕрленнĕ. Совет правителствине сирпĕтсе пăрахас тĕллевпе „сулахай коммуниссемпе“ „сулахай“ ес-ерсем хăйсем хушшинче сойуз тунă иккенне Бухарин çирĕплетсе пачĕ. Вăл калаçусене епĕ хам иртертĕм, терĕ. Çав пухура Бухарина „сулахай“ ес-ерсемпе малала калаçса килĕшме хушрĕç.

Вышинский. Калăр-ха, çав обстойателствăна протокол çине çырса хуман-и?

Манцев. Ăна протокол çине çырнă пулнă.

Вышинский. Кайран вăл протокол ăçта кайса кĕнĕ?

Манцев. 1918 çулта Мускав облăç конференцинче „сулахай коммуниссене“ çĕмĕрсе тăкрĕç. Конференцире пулни çинчен нумайăшĕ парти Тĕпкомĕ тытса пыракан çулйĕршĕн тăчĕç, уншăн тухса калаçрĕç. Бÿрона суйланă 7 çынран пиллĕкĕшĕ Тĕпком çулйĕрĕшĕн, Ленин çулйĕрĕшĕн тăракансем пулчĕç, иккĕшне „сулахай коммуниссенчен“—мана тата Ломова суйларĕç.

„Сулахай коммуниссен“ фракцин конференци вĕçĕнче пулнă ларувĕнче фракцине салатса йама, фракцилĕ ĕçе чарса лартма йышăннăччĕ. Епĕ калама тивĕç, вăл чунтан тунă йапала пулман, мĕншĕн тесен фракцин çав ларувĕнчех, манăн тата Ломовăн партин облăç комитетĕнче ĕçлеме отказ памала, тесе йышăннăччĕ. Куна ĕнтĕ облăç комитетĕнче Тĕпком çулйĕрĕшĕн тăракансем пуринчен те нумайрах пулнăран çавăн пек тунăччĕ. Фракци ларувĕ хыççăн „сулахай коммуниссен“ облăçри бÿро членĕ пулнисен кĕске вăхăтлă ларăвĕ пулса иртрĕ. Вăл ларура епĕ çÿлте асăннисем пур те пурччĕ. Çав ларура, Бухарин панă сĕнÿ тăрăх „сулахай коммуниссем“ парти Тĕпкомĕпе Совет правителстви тĕлĕшпе чăннипе мĕнле позици тытса тăнине (вăл епĕр вăл правителствă сирпĕтсе пăрахма хатĕрленни пулнă) партирен пытарса усрас тĕллевпе, мана тата Йаковлевăна протоколра çырса хунине, епĕ çÿлте каласа хăварнăскере, пĕтерме хушнăччĕ. Вăл ĕçе епĕ турăм.

Вышинский. Есĕр Йаковлевăпа протокола пĕтертĕр?

Манцев. Епĕ тата Йаковлевă çав каçах йе çав çĕрех вăл протокола пĕтертĕмĕр.

Вышинский. Судпа айăпланакан Бухарин, ку çапла пулнă, сирĕн Ленина, Сталина тата Свердлова арĕçлес ĕмĕт пулнă, тесе çирĕплететĕр-и есĕр?

Бухарин. Çапла, çавăн пек самант пулнă тесе çирĕплететĕп епĕ.

Вышинский. Çавăн пек ĕмĕте пуçарса йараканĕ кам пулнă, есĕр-и?

Бухарин. Вăл шухăш-ĕмĕте пуçарса йараканĕ Троцкий пулнă.

Вышинский. Çакна сире Троцкий хушрĕ-и?

Бухарин. Çак, вăл мана мĕн те пулин хушма пултармалăх пирĕн хушăра ун пек çыхăну пулман.

Вышинский. Мĕншĕн-ха есĕр Троцкин пуçарăвне йышăннă тата ăна пурнăça кĕртме пуçланă?

Бухарин. Мĕншĕн тесен „сулахай коммуниссен“ йертсе пыракан ушкăнĕнче вăл плана ырлатчĕç, хутне кĕретчĕç.

Вышинский. Çапла вара есĕр Троцкий пуçарувĕпе килĕшнĕ, Ленина, Сталина, Свердлова арĕçлес ыйтура есĕр унăн пуçарувĕн хутне кĕнĕ, ăна пулăшнă, мĕншĕн тесен, сирĕн хăвăрăн та çавнашкал планах пулнă. Çапла-и?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Свидетелницă Йаковлевă, Стуков выступленийе çинчен Бухаринпа калаçнă-и есĕр?

Йаковлевă. Мана Стуков: Бухарин хушнă тăрăх епĕ вăл ĕçе кирлĕ пек никĕслес тĕлĕшпе тухса калаçрăм, терĕ. Стуковăн çав выступленийĕнче политикăлă кĕрешÿ малашне мĕнле пулмали çинчен, правителствăна, ăна йертсе пыракан Ленина, Сталина тата Свердлова арĕçлесси çинчен, тата кĕрешÿ çивĕчленсе кайас-мĕн пулсан, партин çав виçĕ çулпуçне вĕлерме пулма пултарасси çинчен те сăмах пулнă. Епĕ ун çинчен Бухарина пĕлтернеччĕ, вара вăл ăна çапла тесе çирĕплетрĕ.

Вышинский (Манцев йенне çавăрăнса). Есĕр те çавăн пекех Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлерме шутлани-ĕмĕтленни пулнă тесе çирĕплететтĕр-и?

Манцев. Çапла.

Вышинский. Свидетел Осинский, Ленин, Сталин тата Свердлов йулташсене арĕçлеме тата вĕсене вĕлерме шутлани çинчен хăвăр, Бухаринран пĕлнĕ иккенне татăклах çирĕплететĕри есĕр?

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" процесĕ

В. Н. Манцев свидетеле допрос туни

(Йулашки)

Осинский. Ăна епĕ çирĕплететĕп. Епĕ каласа патăм, епĕ ун çинчен Йаковлевăран Бухарина мĕнле пĕлтернĕ çавăн пекех пĕлтĕм терĕм, вара ăна вăл çапла тесе çирĕплетрĕ.

Вышинский. Свидетел Манцев, малала калăр.

Манцев. Тата парти çулпуçĕсене вĕлересси çинчен директивăна кам пани пирки чарăнса тăма ирĕк парăр мана.

Епĕ çакна пĕлсе тăнă: „сулахай" ес-ерсемпе сойуз тунисер пуçне тата „сулахай коммуниссем" Троцкипе пĕршухăшлă пулнă.

Вышинский. Сире Троцкий патĕнче пулма тата вăл темăна калаçма тӳр килнĕччĕ-и?

Манцев. Çапла, епĕ Троцкий патĕнче пулнă тата ун çинчен калаçнă.

Вышинский. Троцкий Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлерме кирлĕ тесе каларĕ-и сире?

Манцев. Çапла, Троцкий ун çинчен каларĕ.

Вышинский. Апла пулсан, Троцкий Бухаринпа пĕрле Ленина, Сталина тата Свердлова вĕлерме хатĕрленнинĕ, тесе калама пулать-и?

Манцев. Çапла, ку тĕрĕс.

Вышинский. Çав план çинчен есĕр ăçтан пĕлнĕ?

Манцев. Епĕ хам ăна Йаковлевăран, Троцкирен тата ыттисенчен те пĕлнĕ.

Вышинский. Сире Бухарин Ленинпа Сталина вĕлерме хăй хĕтĕртни çинчен каламан-и?

Манцев. Вăл—решени пулнă.

Вышинский. Кам решенийĕ?

Манцев. „Сулахай коммуниссен" йертсе пыракан органĕн решенийĕ.

Вышинский. Кам пуçарнипе пулнă?

Манцев. Бухарин пуçарнипе.

Вышинский. Халь ĕнтĕ 1919 çул çинчен каласа парăр.

Манцев. 1919 çулхи кĕркунне епĕ Кизельштейн, Максимовский, Бухарин йек çынсемпе тĕлпулкаланă. Ун чухне фронтра ĕçсем ăнман, çĕршывра хуçалăх йухăнса кайнă, выçлăх пулнă, епĕр çав йавăрлăхсем пурте парти Тĕп Комитечĕпе правителствăн, çар командованин политики тĕрĕс пулманран килеççĕ, тесе калаçма йурататтăмăр. Çавăнпа пĕрлех тата вăрçăлă операцисен ыйтăвĕсенче Сталин ĕçе татса паракан выранăн йышăнса тăрать, тесе калаçаттăмăр, çавăнпа та вăл калаçусенче Сталин адресĕпе чылай ӳпкелешсе калаçнă. Çав тапхăртах Троцкий секретариатĕнчен мана телефон тăрăх чĕнчĕç, вăл хушнă тăрăх ун патне хватере Кремле пыма ыйтрĕç. Ун патĕнче епĕ çавăн чухнех пултăм. Троцкий мана çапла каларĕ: есĕр парти Тĕп Комитечĕпе правителствă халь тытса пыракан политикăна хирĕç тăракан çын иккенĕ çинчен пĕлтерчĕ мана Бухарин, терĕ. Вăл: „сулахай коммуниссем" пулнисенчен чылайăшĕ хальхи вăхăтра хăйсем 1918 çулта палăртса хунă плана çĕнĕрен ĕçе йарассине хирĕç мар, епĕ ăна пĕлетĕп, терĕ. Ун чухнехи политикăлă лару-тăрува хакласа, Троцкий çапла каларĕ: фронтри ĕççем ăнăççăррине пула, хуçалăх йухăнса кайнине пула, выçлăха пула Совет влаçĕн ĕçĕсем начар, ишĕлсе анас пек, терĕ; фронтри лару-тăрусем çав тери начар, Мускава памала пулатех, терĕ; çаксемшĕн, унăн сăмахĕ тăрăх, йалтах Сталин айăплă, вăл Ленин çине ĕçе татса памалах пысăк влийани парса тăрать, терĕ; çавăнпа та ку правителства сирпĕтсе пăрахас пулать, Бухаринпа хăйĕн (Троцкин) позицийĕ çинче тăма пĕтĕмĕшпех те туллин килĕшекен çынсенчен çĕнĕ правителства тăвас пулать, терĕ. Малтан вăл çакна епĕр Бухаринпа килештернĕ, терĕ.

Троцкий, ку ĕç ăнăçлăн пуласса шанса тăма кирлĕ услови—Сталина кăтартса парахасси пулма тивĕç, терĕ. Çавăн чухнех вăл çапла каларĕ: Сталинпа ман хушăра вăрçă операцийĕсене илсе пырас ыйтусем, тĕлĕшпе хирĕçӳсем пур; епĕ çав хирĕçӳсенчен пĕринпе усă курса фронтсем тăрăх çӳренĕ чух перерĕшĕнче, Сталин ăçта пулнă çавăнта отрйад вайĕ емпе йе тĕрĕсрех хаман охранăпа Сталина арĕслесшĕн, терĕ. Унăн сăмахĕсене астăватăп-ха, вăл: çавăн пек тусан Ленин тата Тĕп Комитет кайала чакĕç, терĕ.

Çакăн хыççăн епĕ Бухаринпа та курнăçрăм, ун çинчен ăна каласа патăм. Бухарин мана: лару-тăрува хакланипе те, Троцкий мĕн тума палăртса хунипе те епĕ петĕмĕшпех те туллийĕнех килĕшетĕп, терĕ.

Вышинский. Апла пулсан, 1919 çулта Троцкипе „сулахай коммуниссем" совета хирĕç заговор организацилеме çĕнĕрен хăтланса пăхнă?

Манцев. Çапла. Кун хыççăн часах манăн Мускавран тухса каймала пулчĕ, вăл ĕç малала мĕнле пулса пынине епĕ пĕлместĕп.

Вышинский. Малала ĕç мĕнле пулнă, 1920 çулта мĕн пулнă?

Манцев. Епĕ ун чухне Пĕтĕм Украинăри чрезвычайлă комиссии председателĕ тата фронтăн уйрăм пайĕн начальникĕ пулнă. Сталин Харьковран тухса кайнă чух Харьков узелĕнчи ОТЧК начальникĕ мана çакна пĕлтерчĕ: Сталин йулташ пулнă пуйăс çине, вăл пулнă вакун çине тапăннине кăтартса паракан йĕрсене тупнă, терĕ. Ĕç пуçласа йанăччĕ, ĕçе УВЧК президиумĕн следователĕ пулса тăракан Гусакова панăччĕ. Çавăн хыççăн часах Троцкий пырса çитрĕ. Çак ĕç çинчен епĕ Троцкийе, ăна хăй вакунĕнче доклад панă чух, ытти ĕççемпе пĕрле каласа патăм. Троцкий кулса илчĕ те каларĕ: вăл ĕçе сарса йама кирлĕ мар, мĕншĕн тесен хамăр йулташсем сийен курма пултараççĕ, терĕ. Вăл ĕçе вĕçне çитийех тĕпчемен, Харьковри Ревтрибунала йанă та унта чарса лартнă.

Вышинский. Апла вара тӳррĕмех кам кăтартса панипе пулнă вăл?

Манцев. Еп ăна пĕлместĕп.

Вышинский. Анчах есĕр ăна тĕпчесе пĕлме тивĕç пулнă вĕт-ха?

Манцев. Епĕ панă тăрăх ĕçе Ревтрибунала йанă пулнă. Ĕçе тĕпчесе çитермен.

Вышинский. Çавăн çинчен калатăп та епĕ. Ăна есĕр Троцкипе калаçнă хыççăн çапла турăр-и?

Манцев. Çапла.

Вышинский. Апла пулсан вăл кăтартса панă тăрăх?

Манцев. Шапах тĕрĕс.

Б. Д. Камков свидетеле допрос туни*)

Вышинский. Камков свидетел, калăр-ха, есĕр 1918 çулта „сулахай коммуниссен" ушкăнĕпе тата „сулахай" ес-ерсен ушкăнĕпе пĕрлешсе ĕçлес пирки Бухаринпа калаçу туса иртерни пулнă-и?

Камков. Пĕрехинче Смольнăй институтĕнче мана Бухарин тăратрĕ те çăкнашкал каларĕ: Брестри килĕшӳ çине мĕнле пăхни пирки большевиксен партин лару-тăрувĕ йавăрланса пырать тата вăл чылай çивĕчленсе çитрĕ,—терĕ. Пирĕн,—тесе каларĕ вăл,—„сулахай коммуниссенчен" тата „сулахай" есерсенчен Брест килĕшӳне хирĕç правителствă тума пултарас пирки ыйту тăрать. Çакăнтах, çак çĕнĕ правителствăн председателĕ пулма пултаракан Пйатаков йатне каласа пачĕ. Ун хыççăн çакăнтах кăна практикăла мĕнле пурнăçа кĕртмеле тесе епĕ панă ыйту çине, 1924 çулта Бухарин пичетре тухса каланă хыççăн темиçе хут каланă фразăна Ленина арĕслес пирки каланă пулнă.

Вышинский. Ку фразăна есĕр каларăр-и йе вăл каларĕ?

Камков. Пирĕн калаçу çинчен чи малтан Бухарин халăха пĕлтернĕ. Тата манăн çакна каламала, 1924 çулта çак истори çинчен хаçатсенче вуласан епĕ питех те тĕлĕнтĕм, ыйтува пуçхĕрлĕ лартнийĕ тĕлĕнтерчĕ мана, Бухарин каланă сăмахсене ман çума сыпăçтарнă.

Вăл сăмахсене епĕ мар, Бухарин каланă.

Вышинский. Ун чухне совет влаçне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе „сулахай коммуниссемпе" сирĕн контакт пулнă-и?

Камков. Ленин Германипе сепаратлă килĕшӳ тума сĕнсен,—ăна вăл хăй те латсăр та кирсĕр килĕшӳ, контрибуцилĕ, аннексилĕ килĕшӳ, тесе калань,—пире вăл пачах килĕшӳсĕр пек туйăнчĕ. Епĕр пĕтĕм вăйпа ку килĕшӳве тăвас марришĕн хутăмăр. Халь анчах пуçтаранса пыракан, тата çирĕпленсе çитмен парти пулса тăнипе çакăнпа йунашар уççăнах тепĕр, пире пысăк шанчăк паракан тĕслĕх пулман пулсан, епĕр çакăн çинче чаранса тăнă пулăттăмăр, çакăн пек инçе кайман пулăттăмăр.

Вышинский. Мĕн-ха сире шанчăк панă?

Камков. Вăл „сулахай коммуниссен" ушкăнĕ пурри. Çавăнпа та епĕр пĕрмайах „сулахай коммуниссемпе" çавăн пек йе урăхла контакт шыранă. Брестри килĕшӳве хирĕç пĕрлешсе кĕрешмели майсен контактне шыранă.

Вышинский. Владимир Илйич Ленин пуç пулса йертсе пыракан совет правителствине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе „сулахай коммуниссемпе" килĕшӳ пулнă-и?

Камков. Çавăн пек килĕшӳ тунă пулнă.

Вышинский. 1918 çулта пулнă „сулахай" ес-ерсен пăлхавĕ çак килĕшӳве малала сарни пулман-и?

Камков. Пире уйăрса пĕччен тăратса хăварнă пулсан, епĕр, „сулахай" ес-ерсем, çакăн пек инçе кайман пулăттăмăр.

Вышинский. Есĕр пăлхав тума кайнă, кам çине шанса?

Камков „Сулахай коммуниссем" пулăшасси çине.

Вышинский. „Сулахай коммуниссем" ийульте пулнă пăлхава пĕлнĕ-и?

Камков. Çапла.

Вышинский. Пĕтĕмпех?

Камков. Пĕтĕмпех. Карелинран илнĕ информаци тăрăх суд умĕнхи следствире епĕ каларăм.

Вышинский. Уйрăмăн илсен, Бухарин, „сулахай коммуниссен" руководителĕ, 1918 çулта ийульте тапранса кайнă пăлхава хатĕрленни çинчен пĕлсе тăнă-и?

Камков. Карелин информацийĕ тăрăх, вăл пĕлсе тăнă.

Вышинский. Манăн ыйтусем çук.

*) Кĕскетнĕ стенограммă.

Процесăн йулашки кунĕ

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегин мартăн 12-мĕшĕнчи ирхи ларувĕ 11 сехетре уçăлать. Суд айăпланакансен йулашки сăмахĕсене итлет.

Кантăрлахи перерывччен суд айăпланакан Ивановăн, Крестинскин, Зубаревăн, Рыковăн, Шаранговичăн, Ходжайевăн, Зеленскин, Икрамовăн, Раковскин, Розенгольцан йулашки сăмахĕсене итленĕ.

Каçхи ларура суд айăпланакан Бухаринăн, Левинăн, Булановăн, Йагодан, Крючковăн, Плетневăн, Казаковăн тата Максимов-Диковскин йулашки сăмахĕсене итленĕ.

21 сехет те 25 минутра ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ приговор йышăнма канашламали пӳлĕме кайать.

***

Мартăн 13-мĕшĕнче ирхине 4 сехетре Суд Председателĕ—ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги Председателĕ армвойенйурист В. В. Ульрих йулташ ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллеги приговорне вуласа парать.

(ТАСС).

СУД ПРИГОВОРĔ—ХАЛĂХ ПРИГОВОРĔ

Йытăсене—йытă вилĕмĕ!

(Русаковски трамвай деповĕнчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăщчисен митингĕ йышăннă резольуцирен)

Епĕр, Мускав хулинчи Русаковски трамвай деповĕнчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служăщчисем митингра ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ сылтăмла-троцкисла блокра „пулнă предателсем" тăван çĕршыва сутакансем пирки—Бухарин, Рыков, Йагода, Крестинский, Розенгольц, Икрамов, Ходжайев т. ыттисем пирки йышăннă приговор çинчен пĕлтернине пĕтĕм кăмăлтан ырласа итлерĕмĕр.

Аслă çул çинчи çак фашисла бандитсем ССР Союзĕнчи социалисăмлă стройа сирпĕтсе пăрахма, ĕлĕкхи пек тепĕр хут капиталисăмлă йĕрке туса хума хатĕрленнĕ. Вĕсем халăхăн хаклă çулпуçĕсен пĕтĕм тĕнчери ĕççынисен çулпуçĕсен—Ленинпа Сталин пурнăçĕ çине ала çекленĕ. Вĕсем совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене—Кирова, Куйбышева, Менжинскине, Горькине вĕлернĕ.

Совет сучĕн приговорне пĕр кăмăлпа ырлатпăр. Йытăсене—йытă вилĕмĕ! Пролетариат диктатурин хĕçĕ преступниксене тивĕçлипе тĕрĕс касать. Вĕсене персе пăрахассисĕр пуçне урăх наказани пулма пултараймасть.

Пирĕн тăван çĕршывăн хăвачĕпе тĕрекне кисретме пултаракан вăй тĕнчере çук. Епĕр социалисăмлă государствă хăватне тата ытларах çине тăрса тĕреклетĕпĕр. Хамăр р тсене большевиксен партипе хамăран генилĕ çулпуçăмăр Сталин йулташ тавра тата ытларах таччăн пĕтĕçтерĕпĕр.

(ТАСС).

Совет халăхĕн приговорĕ

(Шупашкарти спиртзавод коллективĕн митингĕ йышăннă резольуци)

Епĕр, Шупашкарти спиртзавод рабочийĕсем, инженерла-техникла работниксем тата служăщчисем, фашисла йуплă заговорщиксем пирки, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă Бухарин, Рыков, Йагода т. ыт. пирки ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ йышăннă приговора пĕтĕм чĕререн саламлатпăр.

Ылханлă тăшмансем, пирĕн тăван çĕршыв çине фашисла государствăсене вăрçăпа килтересшĕн пулнă. Тăван çĕршыва пăрахса тăшмансене сутăннă бандитсем, пирĕн социалисăмлă хуçалăха сăтăрланă, ССР Союзĕн çар вăй хăватне хавшатма шпионла, террорла ĕççем тунă,—çаксене следствире тата суд процесĕнче пĕтĕмпех тупса палăртнă.

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ тăван çĕршыва сутакан ирсĕр тăшмансене персе пăрахмала туса тĕрĕс приговор йышăннă.

Верховнăй Судăн Çар Коллегийĕ йышăннă приговор—пĕтĕм совет халăхĕн приговорĕ.

Вилĕм тăшмансене!

Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ!

Хамăран тăван çĕршывшăн, хамăран партишĕн пурнăçа пама та хатĕр

(Смоленск хулинчи № часĕнчи красноармейцăсемпе командирсен пухувĕ йышăннă резольуцирен)

Пирĕн Йежов йулташ йертсе пыракан НКВД органĕсем фашисла шпионсене, Бухарина, Рыкова Йагодана т. ыт. те тара шыв çине кăларчĕç. Вăл шпионсем пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыва сутма шутланă, вĕсем влаçа тепĕр хут помещиксемпе капиталиссене пама шутланă. Анчах тăшмансем йанăшрĕç! Фашисла çĕлен-калтасем совет сучĕ умĕнче тарăççĕ,

Епĕр, бойецсемпе командирсем, хамăран большевикла партине тата совет правителствине çапла шантаратпăр: парти, Сталин йулташ чĕнсен епĕр мĕн пур тăшмансене хирĕç çапăçува тухма, тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинчех çапса çĕмĕрме йаланах хатĕр. Хамăран социалисăмлă тăван çĕршывшăн, хамăран партишĕн епĕр хамăран пурнăçа пама та хатĕр. Епĕр, бойецсем, тата лайăхрах ĕçлес, вĕренес, Хĕрлĕ Çарăн вăйхăватне çирĕплетес, револьуцилĕ сыхăлăха хăпартас тĕлĕшпе пĕр пĕринпе ăмăртатпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван коммунисла большевикла парти тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ!

Совет чикисене тимлĕн те вичкĕн сыхлатпăр

Епĕр, Петергофри № часĕнчи красноармейцăсем Рыков, Бухарин тата заговорла ушкăнри ытти тăшмансем ирсĕр ĕççем тунине пĕлсен; вĕсене мĕнле тарăхса çилленнине каласа пама сăмах та çитмест. Вĕсем тискер кашкăр пек пирĕн хаклă, талантлă çынсене, çирĕп большевиксене, Кирова, Куйбышева, Менжинскине, пирĕн йуратнă аслă писателе М. Горькийе вĕлернĕ. Пирĕн чечеклĕ тăван çĕршыва сутма тăнă, пирĕн ирĕклĕ те хаваслă пурнăçа пĕтерме пикеннĕ. Епĕр, красноармейцăсем, çапла калатпăр: фашиссен урнă йыттисене, ĕçхалăхĕн йĕрĕнчĕклĕ тăшманĕсене пĕрне хăвармиччен персе вĕлермеле! Епĕр хамăран чикесене тимлĕн те вичкĕн сыхлатпăр. Пирĕн çĕршыв аслă та хăватлă, ун çине нимĕнле тăшман та ура пусаймĕ!

Красноармейцă **И. Федотов.**

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренеççĕ

ИШЛЕЙ. Ишек йалсоветĕнче „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренме 28 кружок организациленĕ. Кружоксене комсомолецсем, учителсем йертсе пыраççĕ. Хора-çырма йалĕнче (йалсовет председателĕ Ф. Абрамов) колхозниксемпе йединоличниксене пухса 4 заньати, хĕрарăмсемпе 3 заньати, ватă старикасемпе тата карчăксемпе 1 заньати туса ирттернĕ.

Йалсоветра суйлав Положенине вĕреннĕ май хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçе те тытăннă. Хутла пĕлменнисен шкулĕнче 42 çын вĕренеççĕ.

Арк. Наумов.

ВĂРМАР. Кĕтеснерти „ПСК(б) Партин 15-мĕш сйесĕ" колхозра ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра 24 агитатор ĕçлерĕç. Вĕсенчен 7-шĕ комсомолецсем, ыттисем партире тăман активиссемпе активисткăсем. Халĕ çак агитаторсем кулленех колхозниксемпе колхозницăсене хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ăнлантараççĕ. Уйрăмăнах И. Йаковлев, И. Василйева, М. Кузнецова, П. Скворцов, В. Йефимов йулташсен кружокĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

В. Алендейев.

Чăвашсен Государствă филармонипе Государствă хорĕ 50 çынран тăрать. Халĕ вĕсем пурте „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренме тытăнчĕç. Кружока местком председателĕ Мокляков йулташ йертсе пырать. Суйлав саккунне „Красная Чувашия", „Чăваш Коммунĕ" хаçатсем тăрăх вĕренеççĕ.

А. Семенов.

ЙЕТĔРНЕ. Алексейевкă йалĕнчи пуçламĕш Осоавиахим организаци членĕсем „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренме пуçларĕç. Положени çинчен агитатор И. Илйин йулташ вĕрентет. Осоавиахим членĕсем заньатисене пурте йĕркелĕ çӳреççĕ.

М. Василйев.

ТРАК. „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхозра кашни бригадăрах кружоксем организациленĕ. Кружоксенче „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренеççĕ. Колхозниксене суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе вулав çурт пуçлăхĕ В. Терентйев йулташ уйрăмăнах тăрăшса ĕçлет.

И. Сергейев.

Шупашкарти кооптехникумри студентсем хушшинче суйлав саккунне вĕренме 12 кружок организациленĕ.

Положенине вĕрентнĕ чух пропагандиссем хаçат-журналсенчен тата вырăнти ĕççене пример илсе ăнлантараççĕ. Заньатисем пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ.

Е. Йегоров.

Шупашкарти спирт заводĕнче куллен пулса пыракан политикă ыйтăвĕсене вĕренмели кружок ĕçне лайăх йĕркеленĕ. ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче агитаторсем пулса ĕçленĕ Артемйевăпа Чернова йулташсем халĕ кашни кунах заводри работницăсем хушшинче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентеççĕ. Работницăсем суйлав Положенине пысăк хаваслăхпа вĕренеççĕ.

Кашни кунах цехсенче кантăрлахи канусенче политинформацисем пулса пыраççĕ.

В. Василйев.

Германи çарĕсем Австри çине тапăнса кĕрсе кайнă

Мартăн 11-мĕшĕнче Германи çарĕсем Чехословакинчен пуçласа Швейцари патне çитийех Австри чикки урлă каçса кĕнĕ те, Австрин чылай хулисене йышăнса илнĕ.

Германи çарĕсем тапăнса кĕрес умĕн Германи правителстви Австри правителствине ультиматум панă, çав ультиматумра Австрире мартăн 13-мĕшĕнче плебисцит („Австри Германи империйĕн пайĕ пулма килĕшет-и?" тесе пĕтĕм халăхран ыйтса тухни) тума палăртнине пăрахăçа кăларма, çавăн пекех тата Шушнига премйер-министр ĕçĕнчен отставкăна тухма тата влаçа Зейсс-Инкварт пуç пулса йертсе пыракан гитлеровцăсен аллине пама хушнă. Ультиматума йышăнмасан Германи правителстви Австри çине Германи çарĕсене кĕртсе йарассипе хăратнă. Ультиматума пурнăçа кĕртме Гитлер виçĕ сехет срук панă.

Австри правителстви Германи ультиматумне йышăннă. Шушниг отставкăна тухнă, плебисцита ирттермеле мар тунă.

Австрири гитлеровцăсен пуçлăхĕ Зейсс-Инкварт „вăхăтлăх правителствă" туса хунă, ăна Зейсс-Инкварт хăй пуç пулса йертсе пырать. Çĕнĕ „правителствăн" малтанхи утăмĕ—Австрине кĕрсе каймă Германи çарĕсем вальли чикĕ уçă тани çинчен Гитлера телеграфпа пĕлтерни пулнă.

Пĕтĕм çĕршывĕпех Австрири гитлеровцăсен выступленийĕсем пулса иртеççĕ, вĕсем мĕн пур государствă учрежденийĕсене контроль тăвассине хăйсен аллине йарса илнĕ. Шушнига тата правителствăн ытти членĕсене арĕсленĕ. Германи çарĕсем тапăнса кĕнине хирĕç тăмала марри çинчен пĕтĕм Австри полицийе, çарĕ тата гражданла халăх приказ илнĕ.

Паллă политикăлă дейателсем Австрирен тухса тарма тытăннă. Чылай хуласенче гитлеровцăсемпе фашисăма хирĕçле кĕрешекенсем хушшинче пысăк тытăçусем пулса иртнĕ, çав тытăçусем хыççăн аманнисен хисепĕ нумай шутланать.

Германи Австрине йарса илни мĕн пур демократилĕ çĕршывсенче йавăрран пăшăрхантарнă.

(ТАСС).

СУД

Колхоз пурлăхне çаратакансене тивĕçлипе айăпларĕç

1938 çулти февралĕн 25—26-мĕшсенче Тутаркас районĕнчи халăх сучĕ Шупуçĕнчи „Броневик" колхозри колхоз пурлăхне çаратакансен ĕçне пăхса тухрĕ.

„Броневик" колхоз председателĕ пулнă Василйевпа счетовод Кудинов колхоз тыррине 84 пăт сутса ĕçсе йанă. Кунсăр пуçне колхоз укçине 300 тенкĕ ĕçсе пĕтернĕ. Вĕсемех Мăн-Сĕнтĕрти потребител обшчествин Шупуçĕнчи ларйок прикашчикĕ пулнă Кудиновпа пĕрле йавăçса кооперативăнне 4.085 тенкĕ ĕççе-çисе салатса пĕтернĕ. Колхоз счетоводĕ Кудинов пĕр колхозникăнне килтенех велосипед вăрланă.

Халăх сучĕ ĕççене тĕплĕ пăхса тухса „Броневик" колхоз председателĕ пулнă Василйева 5 çул хушши йусанмали çуртра хупса усрамала тата колхоз пурлăхне салатнăшĕн колхоз валли шыраса илмеле, ларйок прикашчикĕ пулнă Кудинова 7 çул хушши йусанмали çуртра хупса усрамала тата 4.085 тенкĕ укçине кооператива тӳлемеле, Кудинова 2 çул хушши йусанмали çуртра хупса усрамала тата велосипед хакне 500 тенкĕ укçан велосипед хуçине илсе памала приговор йышăнчĕ.

Суд курма пынă колхозниксем приговора ырларĕç.

Г. Польаков.

Ответлă редактор **Н. М. СЕМЕНОВ.**

Академи театрĕнче

Мартăн 14-мĕшĕнче

Чăвашла спектакль

М. ГОРЬКИЙ

„НА ДНЕ"

(4 пайлă)

Художествă руководителĕ Йе. А. ТОКМАКОВ лартать.

Художник Н. Ф. БАЙАКОВ.

Талон № 136.

Шупашкарти кирпĕч заводне

ПЛАНОВИК-ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ

Хватер пур. Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх. Çавнашкалах çезонлă тата йалан ĕçлеме *РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ*

Обшчежити пур.

Дирекци.

3—1.

Пĕлтерни

1938 ç. мартăн 14-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре Учител çуртĕнче—Ленин урамĕ № 3, Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн членĕсен хулари конференцийĕ пухăнать.

Кун йĕркинче:

1. Тĕнне хирĕçле ĕççем хулара мĕнле пыни çинчен Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн хула Совечĕ отчот туса парать.
2. Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн Республикăри сйесне пама делегатсем суйласси.

Конференцине вăхăтра пымала.

Вăрçăлă турăсăрсен Сойузĕн хула совечĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ăратлă выльăх хатĕрлекен кантурне

йалан ĕçлеме кирлĕ:

аслă бухгалтер заместителĕ 1,

расчот уйрăмĕн бухгалтерĕ 1.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Çак адреспе пымала.

Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 7. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ăратлă выльăх хатĕрлекен кантурĕ.

Телефон № 0-57.

2—2

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус, 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 128 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.